1937
ДЕКАБĔР
14
ЫТЛАРИКУН
286 (4798)-мĕш №

Пĕр №-рĕ 10 пус. 19-мĕш çул тухать.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммунĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

ССРС АСЛĂ СОВЕЧĔН СУЙЛАВНЕ ИРТЕРЕС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН ТĔП СУЙЛАВ КОМИÇÇИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

Ĕнер, декабĕрĕн 12-мĕшĕнче, пĕтĕм çĕршывра ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕсен суйлавĕ пулса иртрĕ.

Халăх пит пысăк активлăхпа организацилĕхе кăтартрĕ. Суйлавсем ирхине шăпах 6 сехетре пуçланчĕç.

Округсенчи суйлав комиççийĕсем пĕлтернĕ тăрăх пур çĕрте те 16 сехет тĕлне суйлавçăсенчи нумайрахăш пайĕ сасăланă.

Çĕрле 12 сехетре суйлавсем пĕтнĕ. Участăксенчи тата округсенчи суйлав комиççийĕсем Сойуз Советне тата Национаљнăçсен Советне депутатçем суйлама сасăланин итогĕсене шутласа тухма тытăннă. Декабĕрĕн 13-мĕшĕнче Тĕп Суйлав Комиççийĕ ССР Сойузĕ тăрăх Сойуз Советне тата Национаљнăçсен Советне суйланă депутатсем çинчен пĕлтерме пултарать.

Малтанласа шутласа тухнă тăрăх ССР Сойузĕнчи хуласемпе облăçсенче сасăлама суйлавçăсем 95 процентран сахал мар хутшăннă.

ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавне иртерес тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççийĕ.

Пĕтĕм халăх праçникĕ

Декабĕрĕн 12-мĕшне—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали куна пирĕн тăван çĕршыв калама çук пысăк çĕкленӳпе, чаплă праçник пек кĕтсе илчĕ. Владивостокран Минска çити, Мурманскран Тбилисине çити, Пăрлă океан çыранĕсенчен Вăтам Азири хĕвел пĕçертекен пушхирсене çити,—совет çĕршывĕн ытама кĕми мĕн пур территоринче совет гражданĕсем, вĕсем мĕнле расăран, чĕлхерен тата национаљнăçрен тăнине пăхмасăрах çав кун пурте пĕр туйăмпа пурăнчĕç. Тĕп Суйлав Комиççи малтанласа хисепе илнĕ тăрăх, ССР Сойузĕн хулисемпе облăçĕсенче суйлавçăсем 95 процентран кайа мар сасăланă çĕре хутшăннă.

Йуратса илемлентернĕ, капăрлатса пĕтернĕ хуласемпе йалсем, рабочи поçолăксем, совхозсемпе колхозсем çав кун мĕн иртен пуçласах хаваслăхпа шавларĕç. Чĕре тĕпĕнчен тапса тухакан ырă кăмăлпа хумханнă совет суйлавçисем—стариксем, çамрăксем, рабочисем, колхозниксем, мĕн пур професçири интеллигентсем—гражданла аслă тивĕçе пурнăçа кĕртме васкарĕç, хăйсен сасĕсене коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пама васкарĕç.

Суйлав умĕнхи пухусемпе митингсенче тухса каланă мĕн пур сăмахсенчен; суйлав кунĕнче—суйлав участкисенче, урамсенче, клубсенче чĕррĕн пулса иртнĕ мĕн пур калаçусенчен; суйлавсене пĕтĕм çĕршыв праçник чухнехи пек çутă çĕкленӳпе тухнинчен,—халех ĕнтĕ çакна шанчăклăн калама пулать: коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтерчĕ! Пĕтĕм çĕршыв Ленин—Сталин партийĕшĕн, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăларĕ!

Çулсем, вуншар çулсем иртĕç, анчах пирĕн çĕршыври çынсем 1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕшне, ССР Сойузĕн Аслă Советне чи демократилĕ суйлав саккунĕ тăрăх, Сталинла Конституци тăрăх пĕрремĕш хут суйланине йаланах астăвĕç. Суйлав кунĕнче халăх пысăк хастарлăха палăртрĕ, пирĕн пĕтĕм çĕршыв пурăнса иртерекен политикăлă çĕкленӳ пирĕн тăван çĕршывăн историйĕнче ĕмĕрлĕхе йулать Вăл пĕтĕм халăх Ленин—Сталин партийĕ тавра, Совет правительстви тавра пĕрлешнине йар-уççăн кăтартать. Халăх хăйĕн тăван çĕршывне çакăн пек тĕлĕнмеле йуратнине тĕнче нихăçан та курман.

Тăван çĕршыв—анне! Ун çинчен шухăшлани, ăна чечеклентересси шĕн тăрăшни çак кун, ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама палăртнă кандидатсемшĕн мĕнле сасăланинче масçасен политикăлă пысăк активлăхĕнче курăнчĕ.

Совет çĕршывĕнчи чаплă, хăватлă, патриотла халăхсем, хăйсем политикăлă ăнланулă пулнине, организацилĕ пулнине, хăйсем Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн, социалисăм ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйхала хурса ĕçленине тата тепĕр хут кăтартрĕç.

Мускав хулинчи Сталинский суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухувĕнче каланă пит те паха сăмахĕнче Сталин йулташ—совет халăхĕн ашшĕ тата учителĕ çапла каланă:

„Çакăн пек ирĕклĕ те чăннипех демократилĕ суйлавсем социалисăмлă йĕркесем çĕнтерсе илнĕ никĕс çинче кăна, çакăн пек никĕс çинче кăна: пирĕн патăрта социалисăм простă çеç туса пымаççĕ, вăл ĕнтĕ пурнăç йĕркине, халăхăн кулленхи пурнăç йĕркине кĕнĕ никĕс çинче кăна, çуралса тухма пултарнă.

Совет халăхĕ хăйĕн хурçă пек пĕрлĕхне социалисăмшăн кĕрешсе çирĕплетрĕ. Рабочисем, хресченсем, интеллигенци пурте пĕрле пулса социалисăм тăваççĕ, пĕртенпĕр çирĕп çемйене пĕрлешрĕç. Вĕсен пĕрне пĕри хирĕçле интерес çук. Вĕсем хăйсен тăван çĕшывĕн телейĕшĕн тăрăшаççĕ, пĕтĕм халăх ырлăхĕшĕн, телейĕшĕн тăрăшаççĕ Социалисăм никĕсĕ çинче анчах çакăн пек пĕтĕм халăх пĕрлешевĕ пулма пултарнă. Çак пĕрлешӳ пирĕн çĕршыва тĕреклĕ крепăç туса хурать.

Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтерчĕ. Нимĕн иккеленӳ те çук, Совет Сойузĕн Аслă Советне çак блокăн кандидачĕсемех суйланĕç. Блок кандидачĕсене халăх вĕçĕ-хĕррисĕр шанать. Çакăн пек шанни вăл депутатсем çине пысăк ответлăх, пысăк обйазаннăçсем хурать.

Сталин йулташ хăйĕн сăмахĕнче халăх избранникĕн, совет çĕршывĕнчи политикă деятелĕн мĕнле çын пулмали çинчен кăтартса пачĕ.

„Суйлавçăсем, халăх хăйсен депутачĕсенчен çакна ыйтмала: депутатсем хăйсен задачисен çӳлĕшĕнче тăччăр, вĕсем хăйсен ĕçĕнче политикăлă обывателсен картне ансан ан ларччăр, вĕсем Ленин сăнарлă политикăлă деятелсен вырăнче тăччăр, вĕсем Ленин пекех йар-уççă та паллă деятелсем пулччăр, вĕсем Ленин пекех кĕрешӳре нимрен хăраман тата халăх тăшманĕсене нимрен хĕрхенмен çынсем пулччăр, вĕсем ĕç йăвăрланма пуçласан, тавракурăмра мĕнле те пулин хăрушлăх паларса тухма пуçласан кирек мĕнле хăраса ӳкесрен те, кирек мĕнле хăраса ӳкес пеккинчен те ирĕклĕ пулччăр, вĕсем кирек мĕнле хăраса ӳкес пеккинчен те Ленин пекех ирĕклĕ пулччăр, кăткăс ыйтусене татса панă çерте пур йенлĕ ориентаци тата. пĕтĕм плюссемпе минуссене пур йенчен те учота илмеле çĕрте вĕсем, Ленин пекех, ăслă та васкамасăр тăвакансем пулччăр, вĕсем Ленин пекех тĕрĕс те тӳрĕ кăмăллă пулччăр, вĕсем хăйсен халăхне, Ленин йуратнă пекех, йуратчăр".

Çакăн пек ĕнтĕ социалисăмшăн кĕрешекенĕн сăнсăпачĕ. Акă мĕнле требованисем кăларса тăратать совет халăхĕ хăй суйланă çынсем умне.

Сталинла Конституци халăх йенчен депутатсен ĕçне контроль туса тăма пысăк ирĕк парать. Халăхпа тачă çыхăнса тăмала, çĕршывпа халăх интересĕшĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлемеле—çакăн пек ĕнтĕ депутатăн кĕрешӳ кунçулĕ.

Çак çула—халăхăн шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсене палăртса тăракан, çĕнтерӳлĕ Ленин çулĕпе йертсе пыракан Сталин кăтартса панă.

Сталин! Унăн йачĕ кĕрешӳ йалавĕ пулса пĕтĕм çĕршыв çинче вĕлкĕшсе тăрать. Суйлавçăсем хăйсен щанчăкне пĕтĕмпех Сталин çине хураççĕ. Коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăласа, суйлавçăсем тата большевиксен партийĕшĕн, Сталиншăн—пĕрремĕш кандидатшăн—сасăларĕç, унăн йатне чĕре патĕнче тытрĕç

1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕш кунне никам та, нихçан та манас çук. Çакă, хĕллехи, кун пĕтĕм совет çĕршывĕ тăрăх тепĕр хут çуркунне пулчĕ. Çак кун пирĕн çĕршыв чапĕ çинчен пĕтĕм тĕнчене йат сарăлчĕ, Пĕтĕм тĕнчери халăхăн шанăçĕпе ĕмĕтне вăратрĕ. Çак кун совет халăхĕ пĕтĕм тĕнче умĕнче совет обществин мораљпа политикăлă хăватлă пĕрлĕхне, социалисăмла демократии вăйхăватне кăтартрĕ.

ССРС Аслă Совечĕн Сойуз Советне Чăваш республикĕнчен суйланă депутатсем



Спасов Лука Семенович—Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ. Чăваш. Сойуз Советне Улатăр Суйлав Округĕ тăрăх суйланă.



Цыганова Йевдокийа Петровна—Куславкка комбинатĕнчи стахановкă. Чăваш. Сойуз Советне Канашри Суйлав Округĕ тăрăх суйланă.



Андрейева Зойа Ананийевна—Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ. Чăваш. Сойуз Советне Шупашкар Суйлав Округĕ тăрăх суйланă.



Краснов Андрей Михайлович—орденоносец, Йетĕрне районĕнчи „Крестьянская газета" колхоз председателĕ. Чăваш. Сойуз Советне Çĕмĕрле Суйлав Округĕ тăрăх суйланă.

Çĕршыв суйлав кунĕнче

Çĕршывра малтанхи хут

Инçетри Чукоткăра Уелен йатлă йал пур. Унта пурнакансен тӳпине çĕршывра коммуниссемпе партире тăманнисен никам çĕмĕрейми блок кандидачĕсемшен бӳллетенсĕм пама малтанхи хут телей тивнĕ.

Сасăлу пуçланнă вăхăтра тĕттĕм пулнă, сакăр баллă çил вĕрнĕ, пăр сăр тинĕс алхаснă. Суйлав участки çуртне—пысăк аслă шкула—йăмăх хĕрлĕ лозунгсемпе тата ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали кандидатсен портречĕсемпе илемлетнĕ. Майак çинчи прожектор çути пĕтĕм поçолăках лайăх çутатса тăнă.

Инçет-Хĕвелтухăçĕнче

Аслă социалисăмла тăван çĕршывăн инçетри хĕрĕнче—Инçет-Хĕвелтухăçĕнче ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали историлĕ кун пуçланнă вăхăтра Мускав ыйăхран та тăман.

Хабаровскра каçхине çил тăвăл алхасса кайнă. Йурлă çилтăман ураран ӳкерне. Апла пулин те 44-мĕш суйлав участкинче малтанхи икĕ сехет хушшинчех суйлавçăсен виççĕмĕш пайĕ сасăлана.

Ворошиловский суйлав округĕнчи Сойуз Советне суйланма баллотировкăра Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ Йалавлă уйрăм Çар командуйушчийĕ Совет Сойузĕн маршалĕ Блӳхер йулташ тăнă. Рабочисем, колхозниксем, интеллигенци, боецсем тата командирсем мухтавлă полководецшăн хаваслансах сасăланă. Блӳхер маршал йачĕпе вĕсем Рабочисемпе Хресченсен никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çарне, унпа пĕрле тăшмана татăклă çапса салатма хатĕррине пĕлтерсе саламланă.

Марийа Демченко çуралнă йалта

Марийа Демченко çуралнă Староселийе йалĕнче декабĕрĕн 12-мĕшĕнчи пек халăх уйавĕ ку таранччен нихăçан та пулман. Йал пĕтĕмпех уйав тумĕпе тумланнă. Йалти культура çурчĕн фасадне иллюминациленĕ. Колхоз оркестрĕн сасси инçете йанраса кайнă.

Колхоз автомашинисем участкăсене вата колхозниксене турттарса пынă. Ирпе 11 сехет тĕлне суйлавçăсен 70 проценчĕ сасăланă.

Колхоз ĕçĕн уйавĕ

Узбекистанра Андижан хули çывăхĕнчи Мирпустин кишлакĕнче ыран суйлав тенĕ чухне çамрăксем каçхине нумай вăхăт хушши савăнса выљанă. Уйхирсенче йурăсем йанăранă. Ир пулас тĕле суйлав участкине 500 йахăн лайăх тумланнă, хаваслă хлопководецсем пуханнă.

Çамрăксем хăйсен искусствине демонстрациленĕ. Наци хорĕ йурласа чăрăнсан узбек музыкки выљама тытăнать. Оркестра улăштарма ĕлĕк чухăн пулнă узбек хĕрĕ Замирхан ташă ăсти тухать. Унăн ашшĕ—Курбанали — революцичченхăйĕн савăнăççăр çамрăклăхне вырăнти байсем (кулаксем) патĕнче батракра ĕçлесе иртернĕ. Курбаналийăн нихçан та ни çăкăр, ни тум пулман. Халĕ Курбанали колхозник. Унăн çемйи лайăх тумланнă, çăкăрсăр нушаланнине такçанах маннă. Иртнĕ çул унăн çемйине колхоз 20 пин тенкĕ тупăш панă, каçал 30 пин тенкĕ пулать.

Балти тинĕс çинчи Хĕрлĕ флот матросĕсем патĕнче

Хĕрлĕ йалавлă балти флочĕн легендарлă карапĕ „Аврора" крейсĕр çинче декабĕрĕн 12-мĕшĕнче ирхине 9 сехетре çӳлти палубăра пĕтĕм состав йĕркеленсе тăнă. Крейсер командованийĕ хĕрлĕ флот матросĕсене тата командирсене суйлав кунĕ йачĕпе сывлăх суннă. Кормăри мачт çине Интернационал йурласа ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитетне парнелесе пурçăн йалав хăпартнă.

Вахтăра тăракансем, дежурствăна улăштарса, кубрисене аннă, уйав тумĕсене тăхăнса васкаса суйлав участкине кайнă. Кăнтăрла иртсен пĕр сехет тĕлне суйлавçăсен конверчĕсем пурте пекех пичетленĕ урнăра выртнă.

Компанин пысăк кайуттинче пурте хаваслă пулнă. Духовой оркестр хыççăн джаз выљанă, йурăсем йурланă, ташланă.

— Ку каç пурте пекех çывăрмарĕç,—тенĕ ватă матрос Лапин йулташ.—Кун пек кун умĕн, йуратнă Сталин сăмахне итленĕ хыççăн, ĕнер епĕр ăна пурте итлерĕмĕр, çывăрса кайма та йăвăр.

* * *

Хĕрлĕ флот матросĕсем—шыв айĕнче çӳрекенсем хăйсен суйлав участкине питĕ лайăх хатĕрленĕ. Инçетри боецсен ушкăнĕ суйлава хутшăнас тесе буксирпа пăрсем витĕрех ишсе тухнă.

(ТАСС).

Дельбоса вĕлерме шутланă

ПАРИЖ, декабĕрĕн 11-мĕш (ТАСС). Хальхи вăхатра Хĕвелтухăç Йевропă тăрăх çӳрекен Дельбоса (Францин йутçĕршыв ĕçĕсен министăрне) вĕлерме хатĕрленни çинчен пĕтĕм пичет сведенисем пичетлесе кăларнă. Дельбоса вĕлерме Венгри террорисĕ Колман Будаи хутшăнса ĕçленипе хатĕрленнĕ, министра Прагăна пырсан вĕлермеле пулнă. Çав Будаи террориса темиçе ерне кайала Франципе Бельги чиккинче тытса арĕсленĕ пулнă. Будаи Валанçийен тĕрминче ларнă чухне унăн адресĕпе йанă шифрлă çырусене чылай йарса илнĕ, вăл çырусене çак йулашки кунсенче тин шифрсене тупса вулама пултарнă. Йарса илнĕ икĕ çырувăн автăрĕ Прагăра Дельбос çине тапăнма хатĕрленме Будайрен укçа ыйтнă. Йулашки сведенисем тăрăх, ăна Прагăра арĕсленĕ.

Пĕтĕм халăхăн уйав кунĕ

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун чăн-чăн пĕтĕм халăх уйав кунĕ пулса тăчĕ.

Ленин хулин урамĕсем, площчĕдĕсем тата çурчĕсем уйав тумĕпе тумланнă.

Ирхине 6 сехетре суйлав участкисен алăкĕсем уçăлнă. Хулара ку сехетсенче нихăçан та халăх кун пек нумай пулман.

Кăнтăрла 12 сехет тĕлне кашни участăкрах суйлавçăсем çурри ытла сасăланă та.

Суйлавçăсем пысăк хавхаланупа аслă Сталинăн чи çывăх соратникĕсемшĕн—Калинин, Жданов, Литвинов йулташсемшĕн сасăланă.

Украинă столицинче — Кийеврă каçалапа 5 сехет тĕлне суйлавçăсем çурри ытла сасăланă. Кийев урамĕсем нихăçанхи пек мар халăхпа тулнă. Хула çинче айалтах самолотсем вĕçнĕ. Вĕсем ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали кандидатсемшĕн—Косиор, Гуçатникова, Богомолец тата Марчак йулташсемшĕн сасăлама чĕнекен листовкăсем пăрахнă.

Сасăлама чи малтан 77-мĕш суйлав участкине 6 сехетрех пынисем хушшинче ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет тата Украинă ССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ Григорий Иванович Петровский йулташ пулнă. Суйлавçăсем ăна ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ.

Радиопа панă Мускаври Сталинский суйлав округĕнчи суйлавçăсен пухувĕнче халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ каланă сăмах Кийев ĕççыннисене вирлĕн хавхалантарнă.

Белорус столицинче—Минскра çĕкленӳлĕ, уйавлă хаваслăх пулнă.

Мĕн пур ĕççыннисен чĕринче халăхсен аслă çулпуçĕн Сталин йулташăн тата унăн мухтавлă соратникĕн—Минск хула суйлав округĕнчен Сойуз Советне депутата суйламали кандидатăн хурçă полководецăн Ворошилов йулташăн йачĕсем.

Кожевеннăй урамри 15 тата 19 №лĕ çуртсем умĕнче суйлав участкине кайма пухăннă суйлавçăсен митингĕ пулса тăнă. Служащчи Захарчук уçă сăмах тухса каланă:

„Епĕр шанса ĕненме пултаратпăр, парти тата Сталин Хĕрлĕ Çара—„Çăпăçуваl", — тесен пирĕн Аслă Совета депутата суйламали кандидат Ворошилов йулташ Хĕрлĕ Çар полкĕсен пуçĕнче пулса пирĕн чикĕсенчен тăшмансене хăвалать тата çапса салатать".

Ташкент хĕрлĕ йалавсемпе, лозунгсемпе, плакатсемпе чечекленнĕ. Çуртсем партипе правительствă руководителĕсен портречĕсемпе илемленнĕ, урамсенче Сталин йулташ тата Ташкент-Ленинский суйлав округĕнчен тăратнă кандидат—Лазар Моисейевич Каганович портречĕсем.

Ташкент-Ленинский суйлав округĕнчи суйлавçăсем хаваслă хумханупа, хăйсен тӳпине тивнĕ пысăк чыспа тулли кăмăллă пулса, суйлав урни патне васканă.

Горькире суйлав питĕ пысăк çĕкленӳпе иртнĕ. Малтанхи пилĕк сехет хушшинче хулара суйлавçăсен икĕ виççĕмĕш пайĕ, Николай Иванович Йежов баллатировкăра тăнă Ленинский районра 72 проценчĕ сасăланă. (ТАСС)

* * *

Совет çĕрĕн хĕвелтухăçри чиккисенче тул çутăлма пуçласан, Мускав каçхи çутăсемпе йăлтăртатнă, Историлĕ кун—1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕш кунĕ персе çитнĕ. Мускав вăхăчĕпе 11 сехет те 45 минутра, Владивосток вăхăчĕпе 6 сехет те 45 минутра тӳрĕ провод тăрăх ТАСС Владивосток хула Совечĕн председателĕпе Кравчук йулташпа çыхăннă. Кравчук йулташ çапла пĕлтернĕ:

— Владивосток вăхăчĕпе ирхине 6 сехетре хулари мĕн пур суйлав участкисенчи комиççисем ĕçе тытăнчĕç те суйлавçăсене сасăлама чĕнчĕç.

Суйлавçăсем бӳллетенсем илчĕç, вăл бӳллетенсем çине коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсен хушамачĕсене кĕртнĕ: Сойуз Советне Владивосток суйлав округĕнчен—Лапкă океан флочĕн мухтавлă подводник А. Г. Бердников тата Национаљнăçсен Советне Инçет-Хĕвелтухăç суйлав округĕнчен—Сучанри чаплă забойщчик П. С. Черпак.

Ирне-мĕнне пăхмасăрах, хула хускалма пуçларĕ. Граждансем суйлав участкисене пыраççĕ.

47-мĕш суйлав участкинче суйлав урни патне чи малтан Лăпкă океан флочĕн командуйушчи заместителĕ Николай Герасимович Кузнецов пычĕ. 146-мĕш участкăра пĕрремĕш бӳллетенсене Завердинсен çемйи суйлав урнине йарать, вăл çемйере Капитон Игнатйевич—стахановец, судоверфри платник бригадисен маçтăрĕ, унăн арăмĕ—Марийа Ивановна, йăмăкĕ—Федосийа Игнатйевна тата амăшĕ—Ксенийа Степановна.

(ТАСС)

Пирĕн депутатсем

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн депутачĕсен суйлавĕсем пулса иртрĕç.

Суйлавра ĕççыннисем хăйсен пысăк активлăхне тата организацилĕхне кăтартрĕç. Малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, Чăваш АСС Республикĕнчи хуласемпе районченче ĕççыннисем сасăлама 97 процентран сахал мар хутшăннă.

Чăваш Республикĕнчен ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Советне депутата çак йулташсем суйланнă: Л. С. Спасов, З. А. Андрейева, П. Е. Цыганова тата А. М. Краснов; ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Национаљнăçсен Советне депутата çак йулташсем суйланнă: С. К. Коротков, Д. П. Краснов, Т. А. Моисейева, О. Т. Харитонова, А. И. Стецкий, П. И. Пумпур, В. П. Чкалов, Г. И. Иванов, М. М. Сахйанова, А. М. Розанов, А. Ф. Горкин тата И. В. Новиков.

ССРС Аслӑ Совечӗн Национаљнӑҫсен Советне Чӑваш республикӗнчен суйланӑ депутатсем

Чкалов Валерий Павлович — Совет Союз Геройӗ. Вырӑс. РСФС Республикӗнчен Национаљнӑҫсен Советне Горький Суйлав Округӗ тӑрӑх суйланӑ.

Иванов Герасим Иванович — ПСК(б)П Обком секретарӗ. Чӑваш. Национаљнӑҫсен Советне ВӑрмарСуйлав Округӗ тӑрӑх суйланӑ.

Горкин Александр Федорович —ССР Союзӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗн секретарӗ. Вырӑс. Национаљнӑҫсен Советне Канаш Суйлав Округӗ тӑрӑх суйланӑ.

Коротков Сергей Ксенофонтович—орденоносец, Чӑваш АССР Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет председателӗн заместителӗ. Вырӑс. Национаљнӑҫсен Советне Йӗпреҫ Суйлав Округӗ тӑрӑх суйланӑ.

Пумпур Петр Иванович—Мускав Ҫар Округӗн Ҫар Сывлӑш вӑйӗсен начаљникӗ. Национаљнӑҫсен Советне Вӑрнар Суйлав Округӗ тӑрӑх суйланӑ

Стецкий Алексей Иванович—ПСК(б) Парти Тӗп Комитечӗн партилӗ пропагандӑпа агитаци пайӗн пуҫлӑхӗ. Вырӑс. Национаљнӑҫсен Советне Шупашкар Суйлав Округӗ тӑрӑх суйланӑ.

Николай Иванович Йежов йулташ сӑмахӗ

Горький хулинче Горький-Сталинский суйлав округӗнчи суйлавҫӑсем умӗнче каланӑ

Йулташсем, кунта тухса каланӑ оратӑрсем сирӗн умра манӑн кандидатурӑна темӗн тӗрлӗ те мухтарӗҫ тата вӗсем Шалти ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗн ӗҫне пысӑк хак пачӗҫ. Ҫакӑн пек тухса каланисем хыҫҫӑн ӗнтӗ мана тухса калама кӑштах йӑвӑртарах. Ҫавӑнпа чи малтан ҫавӑн пек пысӑк хака хунине манӑн хамӑн пахалӑхсемпе манӑн хамӑн заслугӑсем ҫине мар, Ленин—Сталин партийӗ йачӗпе. йышӑнма ирӗк парӑр (нумайччен чарӑнмасӑр тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ), ҫавӑн пек пысӑк хака хунине мана пӑхса ӳстернӗ, вӗрентсе ӳстернӗ тата мана пайан епӗ ӗҫлекен участкӑна ӗҫлеме лартнӑ парти йачӗпе йышӑнма ирӗк парӑр (тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Шалти ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗн ӗҫӗсене ҫакӑн пек пысӑк хака хума тивӗҫли чи малтан пирӗн партирен килет. Епӗ, ман ҫине партипе пирӗн совет правителстви хунӑ задачӑсене вӑйпа пултарулӑх ҫитнӗ таран тӳррӗн те бољшевикла пурнӑҫа кӗртсе пыма тӑрӑшатӑп. Пирӗн парти мӗн пур совет халӑхӗн интересӗсене палӑртса тӑрать. Апла пулсан, бољшевикшӑн ҫав задачӑсене пурнӑҫа кӗртсе пырасси ҫӑмӑл, чыслӑ тата кӑмӑллӑ ӗҫ пулса тӑрать. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Йулташсем, кунта тухса калакан оратӑрсенчен пӗри хӑйӗн сӑмахӗнче поэзиле танаштару илсе кӑтартрӗ. Мана та поэзиле кӑмӑллӑ пулса, поэзиле умсӑмахпа калама пуҫлама ирӗк парӑр. Владимир Илйич Ленин вилсен, пирӗн партин организаторӗ, пӗтӗм ӗҫхалӑхӗн ҫулпуҫӗ, учителӗ Владимир Илйич Ленин вилсен, поетсенчен пӗри ҫапла ҫырнӑ:

„Портретов Ленина не видно:
Похожих не было и нет.
Века уж дорисуют, видно,
Недорисованный портрет".

Паллах, есӗр ӑнлантӑр ӗнтӗ, поет Владимир Илйичӑн фотографи портречӗсем ҫинчен мар, унӑн мӗн пур сӑн-сӑпачӗ, унӑн мӗн пур ӗҫӗсем ҫинчен каланӑ, тата вӑл епохӑри ҫавӑн пек калама ҫук пысӑк ҫынӑн портретне ӗмӗрсем ҫеҫ туса ҫитерме пултараҫҫӗ, тесе шухӑшланӑ. Поет йӑнӑшнӑ, хытӑ йӑнӑшнӑ. Вӑл пирӗн партийӗ ҫителӗклӗ лайӑх пӗлеймен. Ӗмӗрсем хушшинче мар, ҫӗр ҫул хушшинче мар, вуншар ҫулсем хушшинче те мар пирӗн Совет ҫӗршывне халиччен курман ҫӳллӗше ҫӗклеме пултарнӑ, ҫавна тунипе Владимир Илйичӑн поет хӑйӗн сӑввинче асӑннӑ портретне туса ҫитерме пултарнӑ револуци художникӗ, пирӗн социалисӑмлӑ стройкӑн зодчийӗ тупӑнчӗ. Ленин епохин ҫавӑн пек аслӑ, гениллӗ художникӗ, социалисӑм стройкин ҫав зодчийӗ—Ленин портретне ӗҫре туса ҫитерекенни,—пирӗн ҫулпуҫӗ, пирӗн учител, Сталин йулташ пулать. (Нумайччен тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ, „урра" кӑшкӑраҫҫӗ, залра пӗтӗм халӑх ура ҫине тӑрать).

Йулташсем, Владимир Илйичӑн поет ун ҫинчен ҫырнӑ портречӗ—вӑл социалисӑм. Социалисӑм—вӑл ӗнтӗ ӗмӗт ҫеҫ мар, вӑл пурнӑҫра пур, вӑл кӗрешсе илсе хамӑрӑн Сталинла Конституцийе ҫырса хуни. (Нумайччен тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Ҫак аслӑран та аслӑ ҫӗнтерӳве епӗр чи малтан партийе пула тата хамӑрӑн ҫулпуҫӗ Сталин йулташа пула турӑмӑр. Вӑл ҫын хӑйӗнче хамӑр халӑхӑн пӗтӗм ӑсне пухма пултарчӗ. Вӑл ҫын хӑйӗнче хамӑр халӑхӑн пӗтӗм чи лайӑх ӗмӗчӗсене пухма пултарчӗ. Вӑл ҫын хамӑр халӑхӑн ирӗкне, кӑмӑлне, куллен туйса тӑрать, вӑл, куллен кун йӗртсе пырса, пире ҫӗнтерӳрен ҫӗнтерӳ патне илсе пырать. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Йулташсем, вӑл ҫын, Ленин халаласа хӑварнисенчен пӗр утӑм та чакмасӑр, мӗн пур йӑвӑрлӑхсене ҫӗнтерсе пырса, пирӗн партийе йӗртсе пырса, хамӑрӑн ҫӗршыври халӑхсене йӗртсе пырса, Ленин халаланине сыхларӗ кӑна мар, вӑл ҫав халаланине нумай, нумай хут ӳсӗнтерме пултарчӗ. (Нумайччен тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Йулташсем, тӗнчери пӗртен-пӗр пирӗн социалисӑмла совет республики пурӑнма пуҫлани, вӑл сывлӑхлӑ пурӑнни 21 ҫул ҫине кайрӗ ӗнтӗ.

Совет Союзӗ 20 ҫул хушши ӗнтӗ хурҫа пек ҫирӗп, никам тӗкӗнмеле мар крепӑҫ пулса тӑрать, вӑл—тӑшмансӗмшӗн хӑруш, пӗтӗм ӗҫхалӑхӗшӗн савӑнӑҫ пулса—хӑйӗн хӑватне ӳстерсе пырать.

Етемлӗхӗн чи лайӑх ӑс тӑнӗсем нумай ӗмӗр хушши ӗмӗтленсе пурӑнни, темиҫе пин кӗнекесем ҫинче ҫырни—ҫаксем пурте, вӗреннӗ ҫынсем калашле абстрактлӑ, отвлеченнӑй йапаларан—пайанхи пурнӑҫра пурри пулса тӑчӗҫ. Социалисӑм—вӑл ӗнтӗ етемлӗхӗн чи лайӑх ҫыннисен ӗмӗчӗ ҫеҫ мар. Социалисӑм—пурнӑҫа кӗнӗ ӗҫ, вӑл епӗр хамӑрӑн Сталинла Конституцийе ҫырса хуни.

Пурте пӗлеҫҫӗ, Сталинла Конституцире хамӑрӑн ҫитес вӑхӑтри программӑлӑ задачӑсем ҫинчен пӗр сӑмах та каламан. Унта чӑннипе мӗн пуррине анчах ҫырса хунӑ (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Йулташсем, хамӑрӑн пайанхи пурнӑҫра епӗр мӗн курнипе мӗн туйса тӑнине пӗр ҫӗре пӗтӗҫтерсе кӗскен калас пулсан, вӗсене пит кӗскен каланӑ пунктсемпех кӑтартса пама пулать.

Пӗрремӗшӗ:—пирӗн ҫӗршывра капиталисӑмла хутшӑнусене йаланлӑхах пӗтерне, производствӑ хатӗрӗсем уйрӑм харпӑрлӑх пулнине, урӑхла каласан, ҫынна ҫын експлоатациленӗ хутшӑнусене пӗтерне. Ҫавна, йулташсем, кӗрешсе илнӗ анчах мар, ӑна, пурнӑҫра пуррине, хамӑрӑн Сталинла Конституцийе ҫырса хунӑ. Кивӗ, капиталисӑмла хутшӑнусем тавӑрӑнасси пулмасть, нихӑҫан та пулмӗ. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Капиталисӑм лагерӗнчи господасем тем пек тӑрӑшсан та, вӗсен приказчикӗсем — троцкисла-бухаринла, рыковла тата ытти шпионсем пирӗн ҫӗршыва, пирӗн халӑха кайала таварма тем пек тӑрӑшсан та, вӗсем ҫавна нихӑҫан та таваймӗҫ. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Ҫавна, йулташсем, кӗрешсе илсе Сталинла Конституцийе ҫырса хунӑ, ӑна 170 мӗлйунлӑ халӑх, пурте пӗр ҫын пек пулса, хӑйӗн йунӗпе сыхлӗ. (Алӑ ҫупаҫҫӗ). 170 мӗлйунлӑ ӗҫхалӑхӗ хӑйӗн прависене, пурте пӗр ҫын пек пулса, сыхласа тӑни—вӑл питӗ нумай, вӑл мӗн кирли пурте. Ҫав халӑхӑн ирӗкне хуҫма, ӑна капиталисӑмла пусмӑрӑн майкӑчне кайала хӑваласа кӗртме пултаракан вӑй ҫук. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Ку вӑл пирӗн ҫӗршыва нихӑҫан та, никам та кайала ҫавӑрма пултарайманнине кӑтартакан чи лайӑх шанчӑк пулса тӑрать. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Ҫавӑн пек ӗнтӗ, йулташсем, епӗр ҫирӗм ҫул хушши пуҫпулса тӑнин пӗрремӗш итогӗ. Епӗ, епӗр пуҫпулса тӑнин—рабочисемпе хресченсен пуҫпулса тӑнин итогӗ, тетӗп.

Иккӗмӗшӗ: иккӗмӗш итогӗ те кӗрешсе илсе Сталинла Конституцийе ҫырса хунӑ. Ҫав итога йышӑнмасӑр тӑма халӗ совет стройӗн чи хайар тӑшманӗ те пултараймасть.

Ҫав итог акӑ ҫак пулать: пирӗн ҫӗршыв чухӑн, кайа йулнӑ, куљтурӑсӑр, мӗскӗн ҫӗршыв пулнинчен, чӑннипе илсен ҫурма-колони пулнӑ ҫӗршывран, йутҫӗршыв капиталӗ ӑна пусмӑрласа хӑйӗн кӑсйине чыхнӑ ҫӗршывран—пур йӗнпе те малта тӑракан ҫӗршыв пулса тӑчӗ. Чи малтан вӑл хамӑр промышленнӑҫ чечекленсе аталаннӑ тӗлӗшрен малта тӑракан ҫӗршыв пулса тӑчӗ.

Халиччен курман кӗске срукcенче, ун пеккине тӗнчери пӗр капиталисӑмла ҫӗршыв та курман хӑвӑртлӑхсемпе епӗр хаљхи техникӑпа пуйанлатнӑ малта тӑракан йӑвӑр промышленнӑҫпа машиностройени промышленнӑҫӗ туса хутӑмӑр. Чӑн та, йулташсем, шуткӑ мар вӗт, танаҫтарса пӑхар-ха хӑш ҫӗршыва та пулин, ну, калӑпӑр, Пољшӑнах, Совет Союзӗпе. Пирӗн Магнитогорскри завод хӑйех 1936 ҫулта Пољшӑри мӗн пур металлурги завочӗсем пӗрле шӑратнинчен икӗ хут ҫурӑ нумайрах чукун шӑратса кӑларнӑ. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Пирӗн Магнитогорскрипе Кузнецкри заводсем 1936 ҫулта Йапонири мӗн пур заводсем шӑратнинчен 30 процент нумайрах чукун шӑратса кӑларнӑ. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Мӗн каласси пур вара. Есӗр, Горький ҫыннисем, ӑна хӑвӑрӑн облӑҫ опытӗнчен никамран та лайӑхрах куратӑр. Горькири автозавода тата Горькири ҫӗнӗрен туса лартнӑ тепӗр пӗр-ик завод ҫине пӑхнипех те ҫителӗклӗ,—вара пирӗн социалисӑм строителствин калама ҫук пысӑк сарӑмлӑхӗ уҫҫӑн курӑнса тӑракан пулать.

Виҫҫӗмӗшӗ: йалхуҫалӑхне колективлани хамӑрӑн пӗтӗм ҫӗршывӑн ӳсӗмӗ тӗлӗшӗнчен кӗрешсе илни—тата пысӑкраххи пулса тӑрать. Ҫак чи йӑвӑртарах задачӑна та кӗске срукрах ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртсе ҫитерне. Пирӗн йалхуҫалӑхӗ, чи кайа йулнӑ, сапаланчӑк, чи вакӑ уйрӑм хуҫалӑхлӑ пулнӑскер, тӗнчере урӑх ҫӗрте ҫук малта тӑракан техникӑпа пуйанлатнӑ чи шултӑра колективлӑ хуҫалӑх пулса тӑчӗ. Ҫӗршер пин тракторсемпе комбайнсем хресченӗн калама ҫук йӑвӑр ӗҫне ҫӑмӑллатрӗҫ, ӗҫ тухӑҫлӑхне халиччен пулман таран ӳстерсе йачӗҫ.

Ҫакна тунипе епӗр, пӗр йенчен, капиталисӑмла хутшӑнусене ӳстерекен майсене—капиталисӑма ӳстерекен майсене тымартанах татса татӑклӑн пӗтертӗмӗр, производствӑ хатӗрӗсем уйрӑм харпӑрлӑх пулса тӑнине пӗтӗмӗшпех пӗтертӗмӗр, тата, тепӗр йенчен, йалхуҫалӑхӗнче ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартас аслӑран та аслӑ задачӑна татса патӑмӑр. Тӗслӗхе ҫакнах илес. Есӗр пӗлетӗр, 1936 ҫул—ҫанталӑк уйар тӑнӑ ҫул пулчӗ. Ҫав ҫулталӑк ҫанталӑк уйар тӑнӑ тӗлӗшрен 1921 ҫулпа пӗрех те пулӗ. 1921 ҫулта Атӑл тӑрӑхӗнчи пӗтӗм вырӑнсенче тата Совет Союзӗн ытти хӑшпӗр пайӗсенче тырӑ пулман, ҫавӑн пирки выҫлӑх пулнӑ. 1936 ҫулта, пирӗн йалхуҫалӑхӗ колективланнӑ май, епӗр, йулташсем, выҫлӑх курмарӑмӑр ҫеҫ те мар, пирӗн колхозсем тӗрекленсех пычӗҫ. Ҫав ҫитӗнӳсене те, йулташсем, кӗрешсе илсе Сталинла Конституцийе ҫырса хунӑ. Капиталис господасемпе вӗсен приказчикӗсем—троцкиссем, бухаринла-рыковла сволӑчсем, кулаксемпе уйрӑм хуҫалӑх ҫине шанса, хӑйсене тем пек йӑпатсан та,—вӗсем пире кайала ҫавӑрма нихӑҫан та пултараймӗҫ. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Хамӑрӑн колхозлӑ хуҫалӑха кайала, капиталисӑмла хутшӑнусем патне таварма, епӗр никама та ирӗк памастпӑр. Пирӗн, помещиксемпе кулаксен пусмӑр майкӑчӗнчен хӑтӑлнӑ колхозлӑ хресченсем хӑйсен колхозлӑ ӗҫӗн интересӗсене сыхлама пултарӗҫ,—ҫав ӗҫ вӗсене, кулака, ҫанталӑка, турра, шуйттана кама килчӗ ӑна пӑхӑнса тӑнӑ сапаланчӑк уйрӑм хуҫалӑх панипе танлаштарма ҫук нумай усӑ парать.

Пирӗн хресченсем ҫавӑн пек пӑхӑнса тӑнинчен йаланлӑхах хӑтӑлчӗҫ, ӑна кайала, сапаланчӑк, вакӑ хуҫалӑх патне таварма никам та пултараймасть. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Тӑваттӑмӗшӗ: кӗрешсе илсе ҫырса хунӑ тӑваттӑмӗш итог вӑл—ӗҫсӗрлӗхе пӗтерни.

Сирӗн хушӑра кунта, йулташсем, ватӑ рабочисем нумай. Вӗсем, ӗҫсӗр йуласран хӑраса тӑни мӗнле инкек, мӗнле хӑрушӑ пулнине, мӗнле чӗтресе пурӑнмала килнине пӗлеҫҫӗ.

Епӗр сирӗнпе пӗрле 7 ҫул хушши ӗнтӗ ӗҫсӗрлӗх мӗнлине те пӗлместпӗр. Ӗҫсӗрлӗх, ӗҫсӗр йулас хӑрушлӑх—пирӗн ҫӗршывра кайра йулнӑскер. Ҫакӑ ӗнтӗ вӑл социалисӑмла револуци кӗрешсе илнисенчен—чи пысӑккисенчен пӗри пулса тӑрать.

Ӗҫсӗрлӗхе пӗтерни хӑйех те пирӗн ҫӗршыври рабочи класӑн пурнӑҫне халиччен курман ҫӳллӗше ҫӗклерӗ. Анчах ҫавӑнпа пӗрлех пирӗн рабочи класӑн пурнӑҫӗ ҫулран ҫулах лайӑхланса, ӳссе пырать.

Ӗҫ укҫи фончӗ ҫулран ҫулах ӳсет, правителство пурӑнмали ҫурт-йӗрсем тума укҫа-тенкӗ пани ӳссе пырать, страховой фондсем ӳссе пыраҫҫӗ, сывлӑха сиплеме тата санаторлӑ пулӑшу ӳссех пырать т. ыт. те.

Чӑн ӗнтӗ, йулташсем, троцкисла-бухаринла лагерти хӑшпӗр „ӑслайҫӑсем" тепӗр чухне хӗвеланӑҫӗнчи уйрӑм рабочисем ӗҫ укҫине пирӗн уйрӑм рабочисенчен ытларах илеҫҫӗ, тесе пире тӗртсе илме те парахӑҫ мар.

Чи малтан, пирӗн стахановецсем те вӗсенчен сахал мар, ытларах ӗҫлесе илеҫҫӗ, иккӗмӗшӗнчен,—тӗп ӗҫ вӑл мар. Тӗп ӗҫ ҫакӑ— пирӗн пӗтӗм рабочи класӑн пурнӑҫӗ хӗвеланӑҫӗпе Америкӑ нихӑҫан курман ҫӳлти вырӑнта тӑрать.

Йутҫӗршывсенчи пирӗн йулташсем—рабочисем ССР Союзӗнчи рабочи класӑн пурнӑҫӗ пек пурнӑҫ ҫинчен халӗ ӗмӗтленме кӑна пултараҫҫӗ-ха.

Ҫакна, йулташсем, пурнӑҫра пуррине, кӗрешсе илсе хамӑрӑн Сталинла Конституцийе ҫырса хунӑ. Ҫав кӗрешсе илнине пирӗнтен никам та туртса илеймӗ. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Пилӗкӗмӗшӗ: кӗрешсе илнӗ тата ҫырса хунӑ пилӗкӗмӗш итог—вӑл пурне те обйазатељнӑ хутла вӗрентни, тӳлевсӗр вӗренмели права. Пирӗн ҫамрӑксем ҫавна ҫав тери хӑнӑхса ҫитнӗ те ӗнтӗ, урӑхла пулнине вӗсем пӗлмеҫҫӗ те. Пирӗн ҫамрӑксем час-часах ҫапла шутлаҫҫӗ: епӗ вӗренес тетӗп пулсан, епӗ образовани илес тетӗп пулсан, государствӑ мана тӳлевсӗрех вӗрентме те, тата пӑхса усрама та тивӗҫлӗ. Пирӗн ҫӗршывра ҫакна хӑнӑхнӑ. Калӑр-ха ӗнтӗ, ӗлӗк ҫавӑн пек пулнӑ-и? Вӗреннӗшӗн, пуринчен ытла вӑтам тата аслӑ шкулсенче, пысӑк укҫа тӳлемеле пулнипе, социалӑ пулӑсем ҫинчен каламасан та, рабочисемпе хресченсем, тем пекех талантлӑ пулсан та, хӑйсем сайра хутра уйрӑм ҫынсемсӗр пуҫне, вӗренме пултарайман. Пирӗн ҫӗршывра— тӳлевсӗр вӗренӳ, пирӗн кирек хӑш рабочи те, кирек хӑш колхозник те кӗҫӗн шкулран пуҫласа аслӑ шкул таринех тӳлевсӗр вӗренет. Ку та анчах мар, вӑтам йе аслӑ шкула вӗренме кӗрсен, вӑл государствӑран стипенди илет. Пирӗн ҫамрӑксене, калӑпӑр,—сире вӗренме чарнӑ, вӗренес тетӗр пулсан вӗренӳ правишӗн пысӑк укҫа тӳлӗр, тесе калас пулсан, вӑл пирӗн ҫамрӑксемшӗн тискер ӗҫ вырӑннех туйӑннӑ пулӗччӗ. Ҫавнашкал йапала пирӗн ҫамрӑксем умӗнче чӑннипех пулса тӑрас пулсан вӗсем ун пек влаҫа ҫӑва патнех хӑваласа йанӑ пулӗччӗҫ,—ҫавна вӗсем тӗрӗс тунӑ пулӗччӗҫ, мӗншӗн тесен ҫавӑн пек капиталиссен влаҫӗ анчах тума пултарать.

Ҫак аслӑран та аслӑ кӗрешсе илнине пирӗн ӗҫхалӑхӗ, пирӗн ҫамрӑксем нихӑҫан та, никама та памӗҫ. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Улттӑмӗшӗ: йулташсем, царисӑмпа капиталисӑмла ҫӗршывсен чи тӗксӗм страницисенчен пӗри наци ыйтуне татса паманни, нацисем пӗртан марри пулса тӑрать. Пирӗн ҫӗршывра хаљ ӗнтӗ наци ыйтувӗ—уйрӑм нацисем пӗртанмарри ҫинчен тӑракан ыйту ҫук. Совет ҫӗршывӗ—Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӑсен Союзӗ—нумай нацисен союзӗ, аслӑ социалисӑмлӑ советлӑ государствӑна пӗрле туса пыракан нацисем пӗр пулса ӗҫлекен ҫӗршыв пулса тӑрать. Ҫавна, йулташсем, кӗрешсе илсе Сталинла Конституцийе ҫырса хунӑ. Ҫавна, йулташсем, пирӗнтен никам та туртса илеймӗ. (Тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ).

Капиталиссем нацисем хирӗҫесси ҫине шаннине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Пирӗн совет халӑхӗсем хӑйсен социалисӑмла тӑван ҫӗршывне пурте пӗр пулса сыхлӗҫ. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Ҫиччӗмӗшӗ: йулашкинчен, тата тепӗр итог—вӑл хӗрарӑмсен пӗртанлӑхӗ пирки тӑракан ыйту.

Царисӑм вӑхӑтӗнче хӗрарӑмӑн пурнӑҫӗ тӗксӗм, чуралӑ пулни—кайра йулчӗ.

Пирӗн хӗрарӑмсем, Октабӗр револуцийӗ ҫӗнтернине пула, епӗр социалисӑм строителствине ҫӗнтерӳлӗн туса пынине пула, арҫынпа пӗртан правасем кӗрешсе илчӗҫ те унпа усӑ кураҫҫӗ.

Совет Союзӗнче хӗрарӑма хуҫалӑхӑн, государствӑн, куљтурӑпа обшчествӑлӑ-политикӑлӑ пурнӑҫӑн мӗн пур облӑҫӗсенче те арҫынпа пӗртан правасем панӑ.

Ҫавна кӗрешсе илсе пирӗн Сталинла Конституцийе ҫырса хунӑ. Ӑна пирӗнтен никам та туртса илеймӗ. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Пирӗн хӗрарӑмсем хӑйсен ҫав прависене пӗтӗм вӑйпа сыхлӗҫ. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Акӑ, йулташсем, кӗскен каласан, епӗр кӗрешсе илсе Сталинла Конституцийе ҫырса хунӑ тӗп итогсем. Вӗсем—пурнӑҫра пур, вӗсем хаљ куҫ умӗнче.

Анчах, йулташсем, ҫав улӑпла ҫитӗнӳсене тума пире ҫӑмӑл пулман. Вӗсене рабочи класпа ӗҫхресченӗсен тарӗпе, йунӗпе кӗрешсе илнӗ. Ҫав ҫитӗнӳсене тӑвиччен малтан пирӗн калама ҫук пысӑк йӑвӑрлӑхсене ҫӗнтермеле килчӗ. Ҫав йӑвӑрлӑхсене ҫӗнтерме пирӗн нумай парнесем кӳмеле пулчӗ. Рабочи клас ӗҫӗшӗн социалисӑмшӑн кӗрешсе хамӑрӑн ҫӗршывӑн чи лайӑх ывӑлӗсем сахалӑшӗ мар пуҫӗсене хучӗҫ.

Сирӗнтен нумайӑшӗ граждӑн вӑрҫи ҫулӗсене астӑваҫҫӗ. Ун чухне чухӑн Российӑ, ҫитменни ҫине империалисӑм вӑрҫине пула вӑйсӑрланнӑ, пӗтӗмпех йухӑннӑ Российӑ чи малта тӑракан техникӑпа хӗҫпӑшалланнӑ интервентсене тата шурӑгвардейцӑсене хирӗҫ ҫӑкӑрсӑр, транспортсӑр, машинсемсӗр, ҫарауран, шӑлпа тес пулать, кӗрешнӗ.

Граждӑн вӑрҫи хыҫҫӑн та, хаљ епӗр, совет государстви 20 ҫул пурӑннӑ хыҫҫӑн, итог тӑвакан ҫитӗнӳсене пурнӑҫа кӳртме пирӗн сахал мар сухатусемпе йӑвӑрлӑхсем курмала пулчӗ.

(Йулашки 4-мӗш страницӑра).

ССРС Аслă Совечĕн Националђнăççен Советне Чăваш республикĕнчен суйланă депутатсем

Краснов Петр Дмитрийевич—ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ. Чăваш. Националђнăççен Советне Çĕрпӳ Суйлав Округĕ тăрăх суйланă

Харитонова Олђга Тихоновна—Патăрйел районĕнчи Хирти Сĕнтĕрти вăтам шкулти учителницă. Чăваш. Националђнăççен Советне Патăрйел Суйлав Округĕ тăрăх суйланă

Новиков Иван Василйевич—ПСК(б)П Çĕмĕрле райком секретарĕ. Вырăс. Националђнăççен Советне Çĕмĕрле Суйлав Округĕ тăрăх суйланă

Розанов Алексей Михайлович—Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ. Вырăс. Националђнăççен Советне Йетĕрне Суйлав Округĕ тăрăх суйланă.

Моисейева Тамара Алексейевна—Улатăрти паровозсем йусакан заводри механически цехан бригадирĕ. Вырăс. Националђнăççен Советне Улатăр Суйлав Округĕ тăрăх суйланă.

Сахйанова Марийа Михайловна—ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнчи Партилĕ Контролђ Комиççин Чăваш республикĕнчи уполномоченнайĕ. Бурйат. Националђнăççен Советне Шупашкар йал Суйлав Округĕ тăрăх суйланă.

Суйлав кунĕ мĕн пур халăхăн аслă праçникĕ пулчĕ

ÇĔМĔРЛЕ, декабĕрĕн 13-мĕшĕ (телефонпа). Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче Çĕмĕрле суйлав округĕнчи пур йалсенче те çав тери чаплă праçник пулса иртрĕ. Çак чаплă куна суйлавçăсем такçанах кĕтнĕ. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче ирхине 5 сехетрех суйлавçăсем хăйсен участкисене ҫаскама пуçларĕç.

Çĕмĕрле хулинче мĕн пурĕ 6 участкă.Ултă участкинче те халăх туллийех. Виççĕмĕш участкăра пуринчен малтан „Болђшевик" заводра ĕçлекен Михийук амăшĕ 70 çулхи карчăк бӳллетенсем илсе сасăламали пӳлĕме кĕрсе кайрĕ. Хăйĕн сӳçĕсем шап-шурă.

— Иртерех килсе сасăлас терĕм,—тет вăл. Участкăсенче пур çĕрте те кĕтмели пӳлĕмсем. Унта хаçат-журналсем, кĕнекесем, шашкă-шахматсем радио, патефон, биллиард. Унтах буфетсенче тĕрлĕ çимĕçсемпе сутă тăваççĕ. Алари ачасен пӳлĕмĕнче пăчĕк çеç вы-сенче ачасем выргаççĕ. Вĕсен амăшĕсем ССР Сойузĕн Аслă Советне депутат суйлама килнĕ.

Çĕмĕрле суйлав округĕнче мĕн пурĕ 13 суйлав участки. Йалсенчи участкăсенче халăх организацилĕхĕ хуларинчен пĕртте кайа мар. Нумай çĕрте хуларинчен те аванрах, йĕркелĕрех ĕçлеççĕ. Уйрăмах Саланча посолкинчи, Атнар йалĕнчи участкăсем аван ĕçлерĕç.

Хĕрлĕ Чутай районĕн центăрĕнче халăх питĕ активлă пухăчнă. Анчах канмали пӳлĕмсенче пĕр хаçат та, пĕр кĕнеке те, нимĕнле вăйăсем те, нимĕн те хатĕрлемен. Кайран, кăнтăрла çитсен çеç организацилеме тытăнчĕç.

Çĕмĕрле округĕнчи суйлавçăсем çав тери пысăк хаваслăхпа, пысăк активлăхпа суйлав участкисене пырса хăйсен сассисене йуратнă кандидатсемшĕн Чкаловшăн, Красновшăн, Новиковшăн пачĕç.

Уйăп Мишши.

★ ○ ★

Сахйанова, Андрейева тата Совет Сойуз Геройĕ полковник Чкаловшăн сасăларăм

1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕш кунĕ пĕтĕм ĕçхалăхĕшĕн ĕмĕр манмалла мар паллă кун пулса йулаť. Пайанхи кун, пирĕн аслă çĕршывăн пĕтĕм ĕçхалăхе Аслă Сталин туса панă чи демократилĕ Конституци тăрăх, Аслă Совета депутатсем суйларĕ.

Декаберĕн 12-мĕш кунĕнче, епĕр, Иккасси ĕççыннисем, хамăрăн тăван çĕршыв малашне те хăватлă, кулђтурлă, ирĕклĕ социалисăмла державă пултăр, тесе тăрăшакан коммунисла партишĕн, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăларăмăр.

Епĕ, 18 çул тултарса 19-мĕш çул çине пуçрăм. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче чи пĕрремĕш хут суйлава хутшăнтăм. Чи малтанхи суйлаврах епĕ Аслă Совета пĕртан тата тӳрех суйламали правапа вăрттăн сасăласа çĕршыв умĕнче калама çук пысăк ĕç турăм. Епĕ, хамăн сасса Сахйанова, Андрейева тата тăван çĕршыв Геройĕ полковник Чкалов йулташсемшĕн патăм. Епĕ суйланă кандидатсем Ленин-Сталин парти еçĕшĕн, пĕтĕм ĕçхалăх ĕçĕшĕн ĕçлекен çирĕп болђшевиксем.

ССР Сойузĕн Аслă Советне Сталинла Конституци тăрăх иртерне суйлав—ССР Сойузĕнчи халăхсен историйĕнче тата советлă государствăн строителствин историнче çĕнĕ утăм туни пулаť. Суйлава пурне те тивĕç, пĕртан тата тӳрех суйламали правапа вăрттăн сасăламала принцип тăрăх пурнăçа кĕртни массăсен политикăла активлăхне ӳстерет, ĕççыннисен çĕнĕ сийĕсене государствăна тытса пырас ĕçе хутшăнтараť.

Иккасси колхозĕнчи бригадир К. Николайева.

★ ○ ★

Суйлав пысăк çĕкленӳпе иртрĕ

КĔÇĔН ЙЕЛЧĔК, декаберĕн 12-мĕш (телефонпа). Курнавашра пайан аслă уйав. Йал тумланнă. Суйлав çуртне кĕмели хапха çинче: „Кăмăллăн кĕтсе илетпĕр", тенĕ лозунг айакранах хавхалантараť. Ака хĕрлĕ йалавсем çакнă лавсемпе колхозниксем суйлав çуртне пырса тăраççĕ. Кунта буфет. Колхоз кашни суйлавçăнах хăналантараť. Колхозниксем коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлама пĕрин хыççăн тепри суйлав урни патне пыраççĕ.

Аслă Шахалђ суйлав участкинчи „Кĕçĕн Шахалђ" колхоз Аслă Совет суйлавĕ кунне ирĕклĕ ĕçĕн çитĕнӳвĕсемпе демонстрацилет. Колхоз кăçал кашни гектартан: ыраш —21,73 центнер, тула—23,87 центнер, сĕлĕ—29,5 центнер, вир—29,53 центнер, вылђăх кăшманĕ 2697 пăт туса илнĕ. Çаксене суйлав участкинче выставкăна тăратнă. Унтах çак чаплă çĕреç ударникĕсен фотохаçачĕ. Çак вăл парти йертсе пынипе тунă тулăх пурнăç савăнăçĕ. Колхозниксем пайан çак телейле те савăнăçлă пурнăç туса паракан партин паттăр та хăйулă ывăл-хĕрĕсене Аслă Совета суйлама хăйсен сассисене параççĕ. Пурнăç тулăх, пурнăç савăк. Колхозниксем суйлав участкинчи буфетра кулачпа чей еçеççĕ. Теприсем шашкăла, шахмăтла вылђаççĕ тата балалайкăпа купăса перлештерсе хăйсен ăсталăхĕпе пĕтĕм суйлавçăсене хаваслантараççĕ. Кăнтăрлапа 12 сехет тĕлне суйлава хутшăнма пултаракансем пурте сасăларĕç. Кунта йалĕнче 485 суйлавçă. Ирхине 10 сехет тĕлне 476 бӳллетенсем йачĕç. 88 çулхи Бабушкина Агрипина тата унăн 71 çулхи шăлне суйлава купăспа пычĕç. Бӳллетенсене йанă хыççăн „Тавтапуç Совет влаçне пире çакăн пек чыс тунăшăн" терĕç те купăс каласа ташларĕç. Шăмалак йалĕнче суйлав пысăк çĕкленӳпе иртрĕ.

Н. Пушкин.

★ ○ ■

Суйлава активлăн хутшăнчĕç

ЕЛĔК суйлав участки ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕ. Суйлав ăнăçлăн иртрĕ. Суйлав декабĕрĕн 12-мĕшĕнче шăп 6 сехетре пуçланчĕ. Суйлавçăсем суйлава активлăн хутшăнчĕç. Участкăра пурĕ 1156 суйлавçă, вĕсенчен суйлава 1105 суйлавçă хутшăннă.

Суйлав çуртне пĕр ерне малтан илемлетсе çитерне пулнă. Стенасем çинче Аслă Совета суйламали кандидатсен — Чкалов, Пумпур, Краснов йулташсен портречĕсем, лозунгсем, плакатсем. Суйлав çуртĕнче суйламали уйрăм пӳлĕмсем пурĕ 32 тунă.

Суйлавçăсем каннă вăхăтра патефон вылђанă, вĕренекенсем йурăсем йурласа панă, сăвăсем каланă, вăйă-кулă пулнă. Каймали пӳлĕмсенче шашкă-шахмăт, биллиард вăййисем пулнă. Буфет ĕçленĕ, кĕнекесем сутакан ларйок пулнă.

Филиппов

Шуртавăш суйлав участкинче

ÇЕРПӲ (Хамăр корр., телефонпа). Шуртавăш суйлав участкинчи суйлавçăсем декабĕрĕн 12-мĕшне ку таранччен нихăçан пулман пысăк уйав кунне кĕтсе илнĕ пек хаваслăн кĕтсе илчĕç. Вĕсем хăйсем Аслă Совета депутатсене тӳрех суйланипе мухтанаççĕ.

— Ĕлĕк патшана такам суйланă. Епĕр ăна пĕлместпĕр. Халĕ епĕр Сталинла Конституци тăрăх çĕршывăн аслă органне—хамăр пĕлсе, шанчăклă, ĕçхалăх интересĕсене сыхлама пултаракан çынсене суйлатпăр. Епĕр суйлама палăртнă кандидатсем халăхăн чи шанчăклă ывăлĕсем, тет ватă суйлавçă Василйев Степан.

Пур киле кĕрсен те Аслă Совета депутата суйлама палăртнă кандидатсем — Чкалов, Андрейева, Краснов портречĕсем, вĕсен биографийĕсем тата суйлав плакачĕсем илемлĕ тăнине курма пулаť. Суйлавçăсене суйлав Положени çинчен, кандидатсем çинчен каласа ăнлантарас тĕлĕшпе участкăри суйлав комиççи тăрăшса ĕçлени паллă. Кашни 10—12 кил пуçне пĕрер йе икшер агитатор уйăрнă. Агитаторсем кружоксенче вĕрентнисĕр пуçне тухса çӳреме пултарайман ватăсемпе инвалидсене килĕсене кайса ăнлантарса панă. Агитаторсемсĕр пуçне пионерсем те активлă ĕçленĕ. Вĕсем суйлавçăсем патне кайса суйлав литературисене вуласа панă, кандидатсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен ăнлантарнă.

Суйлава хатĕрленнĕ май çамрăксен хастарлăхĕпе 26 çынран хор кружокĕ организациленĕ. Кунта çĕнĕ йурăсем йурлама вĕреннĕ. Суйлав умĕнхи пухусем хыççăн вечĕрсем иртернĕ. Йулашки вăхăтра кун пек вечĕрсене 4 ирттернĕ.

Суйлав шкулта пулса иртрĕ. 7 кабинă туса хатĕрленĕ. Суйлавçăсем пĕр йенчен кĕрсе тепĕр йенчен тухмала тунă. Кĕтмели пӳлĕмре буфет, радио, патефон пур.

Ватă çынсемпе ачалă арăмсене суйлав участкине илсе пыма уйрăм лашасем пур.

В. Усли.

—○★○—

Пурин те хаваслă кăмăл

ÇĔРПӲ, декабĕрĕн 13-мĕш (телефонпа). Çерпӳ суйлав округĕнчи Уйкасси суйлав участкинче суйлав питĕ пысăк çĕкленӳпе иртрĕ. Суйлавçăсем пĕрин хыççăн тепри таттисыпписĕр пырса тăчĕç.

Уйкас участкине 4 йал кĕрет: Уйкасси, Тептикасси, Постриккасси тата Ирĕклĕх йалĕ. Инçетри йалсенчен пур çĕртен те йалавсемпе çулпуççен сăнĕсене çĕклесе, хуткупăссем каласа организацилĕн пырса кĕчĕç. Халăх вĕçĕ-хĕррисĕр пырса тăчĕ пулсан та бӳллетен илнĕ çĕрте черет пулмарĕ. Суйлав йĕркелĕ иртрĕ.

Кĕтсе лармали пулĕм—савăну, кулђтурăлă кану вырăнĕ пулса тăчĕ. Унта радио, патефон, икĕ хуткупăс т. ыт. те суйлавçăсен кăмăлне çĕклесе тăчĕç. Буфетра çимели те, ĕçмели те—квас, ситро тавраш çителĕклĕ пулчĕ. Кану пӳлĕмĕнче вăйă-ташă йанраса тăни кĕтсе лармали пӳлĕм уйрăм çуртра пулнă пирки нимĕн чухлĕ те чăрмантармарĕ.

Пĕр суйлав комиççи членĕ сасăлама кайассине пĕлтерсе тăчĕ. Суйлавçăсем кăнтăрла иртсен 1 сехет тĕлне сасăласа пĕтерчĕç. Вăйă-ташă кану суртĕнче çурçĕр иртичченех пычĕ. Пурте хаваслă, пурин çинче те хаваслăх хĕвелĕн шевли вылђани курăнаť.

У. В.

Хамăн ĕмĕрте курманнине куртăм

КУКЕÇ (хамăр корр., телефонпа). Декабĕрĕн 12-мĕш кунĕ мĕн пур ĕççыннисен Ленин—Сталин çĕнтерӳлĕ йалавĕ тавра пĕрлешмели аслă уйавĕ пулса тăчĕ. Декабĕрĕн 12-мĕш кунĕнче çĕршывăн пĕтĕм ĕçхалăхĕ, вăл шутрах Иккасси йалĕнчи ĕççыннисем, Социалисăмла Конституци тăрăх тăван çĕршывăн шанчăклă, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçлекен ывăлĕсемпе хĕрĕсене Аслă Совета депутата суйларĕç.

Суйлав Иккассинчи вăтам шкулăн çуртĕнче пулса иртрĕ. Шкул çуртне тултан та шалтан та хĕрлĕ йалавсемпе, лозунгсемпе, плакатсемпе илемлетнĕ. Суйлавçăсем канмали пӳлĕмре буфет ĕçлет. Ăнсăртран чирленĕ çынна хăвăрт пулăшу памали пӳлĕм пур. Унтах радио, патефон, кĕнеке-хаçатсем, шашкă—шахмăтсем, доминосем. Кам вăхăта мĕнле иртерме шухăшлаť, çавăнпа усă кураť.

Ака пукан çинче шап-шурă сухалă икĕ ватă старик лараççĕ. Вĕсене илме йатарласа лаша йанă пулнă. Анчах вĕсем хăйсене пырса илессе кĕтмен, хăйсем тĕллĕнех суйлав участкине çитсе, хăйсен сассине панă. Халĕ вĕсем ĕçхалăхĕн Аслă çулпуçĕ Сталин йулташ Пĕтĕм Сойузри Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш сйесĕнче çĕнĕ Конституци пройекчĕ çинчен тунă доклада пластинкă çине çырнине патефон каланине итлеççĕ. Ларакансем Сталин докладне итленĕ чухне вăхăчĕ-вăхăчĕпе вăйлăн алă çупаççĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама декабĕрĕн 12-мĕш кунĕнче ирхине шăп 6 сехетре пуçланă. Чи малтан суйлав урни патне суйлава пĕрремĕш хут тăракан Алексей Аверкийев пырса Аслă Совета суйлама хăйĕн сассине пачĕ.

— Çакăншăн епĕ ĕнертенпе çывăрмарăм. Сехет стрелки 6 сехет çине кайасса кĕтсе çĕрĕпе лартăм. Пайан епĕ хамăр тăван çĕршыв умĕнче калама çук пысăк ĕç турăм. Епĕ хамăр тăван çĕршыв малашне те хăватлă, кулђтурлă, ирĕклĕ социалисăмлă державă пултăр, тесе тăрăшакан коммунисла партишĕн, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăларăм. Аслă Совета депутата суйлама тăратнă кандидатсем пирĕн çирĕп, халăх ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйĕсене, кирлĕ пулсан, хăйсен пуçĕсене хĕрхенмен йулташсем.

— Епĕ, пайан, пĕрремĕш хут, пĕртан тата тӳрех суйламали правапа вăрттăн сасăламали принцип тăрăх, ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата З. А. Андрейева, Сахйанова, Чкалов йулташсемшĕн сасăларăм, тесе кăкăр туллин савăнса каласа параť Аверкийев йулташ.

Аверкийев йулаш хыççăнах, 65 çултан иртнĕ Тихонова Праски суйлав комиççи членĕсем ларакан сĕтел умне пырса урнăна суйлав бӳллетенĕсене йачĕ.

— Епĕ, пайанхи пек савăнăçлă куна хамăн ĕмĕрте пĕрремĕш хут курнине пĕтĕм чĕререн каласа паратăп. Пайан, епĕ хамăрăн аслă çулпуç Сталин йулташ туса панă Конституци тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Советне депутатсем суйларăм.

— Тĕнчен улттăмĕш пайĕ çинче, социалисăм çĕнтернĕ çĕршывра арçынĕ те, хĕрарăмĕ те, пурте пĕр правалă. Çак правасемпе епĕр 20 çул усă куратпăр. Çак правасене епĕр никама та парас çук! Пирĕн Сталин совет хĕрарăмĕн прависене туртса илме никама та ирĕк памĕ! Сывă пултăр, пире нушалă пурнăçран тулăх, телейлĕ пурнăç çулĕ çине илсе тухакан Сталин йулташ!

* *

Иккасси суйлав участкинче пурĕ 424 суйлавçă, вĕсем пурте декабĕрĕн 12-мĕшĕнче сасăланă. Çак кун 36 çын пĕрремĕш хут суйлава хутшăннă.

А. Григорйев

★ ○ ★

Çĕр çинче пулман çĕнĕ ĕç турăмăр

ВĂРМАР. (Хамăр корр. телефон тăрăх). Арапуç колхоз членĕ Степан Игнатйевич ĕлĕк-авал нумай хĕн-хур курнă. Çичĕ çул хушши кĕтӳçре çӳренĕ, колхоза кĕриччен çемйи чухăн пулнă. 1930 çулта колхоза кĕрсе, пуйан та кулђтурăлă пурнăç çулĕ çине тухрĕ. Колхоза кĕнĕрешпе тăрăшса ĕçлесе 5 хут премин илнĕ. Вăл халĕ ватă пулсан та (80 çулта) нимĕнле ĕçрен те йулмаст. Кăçал вăл 228 ĕçкунĕ тунă. Уйрăмăнах кантăрсем акса тăвас ĕçре паха опытсем туса, кантăрсен тухăçлăхне ӳстерсе, колхоза нумай пулăшнă. Халĕ Степан мучин карта тулли вылђăх-чĕрлĕх, кӳрнеклĕ çурт-йĕр, пӳлме тулли тырпул пур.

— Колхоз пулман пулсан, епĕр, хресченсем, выçă вилеттĕмĕр, тет вăл.

Суйлав кунĕнче Степан Игнатйевич 6 сехетрех суйлав участкине çитрĕ. Аслă Совета суйлама уйăрнă Ленин-Сталин партийĕн чи лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн сасăланă хыççăн, вăл çапла каласа пачĕ:

— Пайан епĕр çĕр çинче пулман çĕнĕ ĕç турăмăр. Пирĕн йалта пин çынна йахăн, пурте пĕр тăван пек пĕрле пухăнса Аслă Совета суйларăмăр. Ку суйлав кунĕ ĕлĕкхи пурнăçа аса илсен, халђхи пурнăçри калама çук пысăк улшăнусем пулни палăраť. Ĕлĕк пуху тесенех, йала страшник килнĕ пулђ тесе тарса пыганаттăмăр. Халĕ епĕр ваттисем те, çамрăксем те, хĕрарăмсем те, арçынсем те—пурте пĕр правалă, пысăк ĕç тăватпăр.

Тавтапуç аслă Сталин йулташа пире çакăн пек телейлĕ пурнăç туса панăшăн, тет вăл.

Ф. Çитта

—◆○◆—

Хамăр депутатсене кино çинче куртăмăр

ЙĔПРЕÇ. Декабĕрĕн 9-мĕшĕнче Йĕпреçри кинотеатртă „Сойузкинохроникăн" Шупашкарти студийĕ ӳкернĕ „Аслă Совета депутата суйламали кандидатсем" йатлă кино-журнал кăтартрĕç.

Кино курма халăх питĕ нумай пухăннă. Екран çинче хамăрăн тивĕçлĕ кандидатсене—совет халăхĕн шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсене курсан, залри халăх тăвăллăн алă çупса саламларĕ.

Г. Марушев

—○★○—

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн

Атнашри Киров йачĕпе тăракан колхоз (Шăхазан р.) 1937 çулта вăйлă тырпул туса илнипе районра пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. 1938 çулта татах та вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешсе халĕ уйсене йӳр тытма хатĕрленӳ ĕçĕсем туса пыраççĕ. Торф турттараççĕ. Унсăр пуçне колхозри бригадăсем хĕрсех уйа çĕрнĕ тислĕк тăкаççĕ. Пĕтĕмпе 800 дав тăкнă та çитĕ. Ку тĕлĕшпе пур бригадăсем те тăрăшса ĕçлеççĕ.

Исайев

Йуçкассинчи (Ĕлĕк р.) „Социалисăм" колхозра тырпул тухăçне хăпартассипе тăрăшса ĕçлеççĕ. Иртнĕ çулта йӳр тынă вырăнсенче тырă уйрăмăнах лайăх пулнине ăсра тытса, халĕ 50 гектар çине йӳр тытма купăсем купаласа тухрĕç.

С. Йаковлев.

Савăнăçлă пурнăç демонстрацийĕ

Пирĕн умра аслă та такăр çул. Нумай ăрусен ĕмĕчĕсем халĕ пирĕн пурнăçра пур. Пурнăçра йаланлăха çирĕпленнĕ пуйанлăхсем—фабрикăсем, заводсем, шкулсем пысăк комбинатсем. Çурçĕр полђусĕнчен пуçласа Памир йăрĕсем, камчаткăран пуçласа Балти тинĕсне çити сарăлса выртаççĕ аслă çĕршывăн пуйанлăхĕсем. Çавсем пĕтĕмпех пирĕн.

Ирхине 5 сехетре посолкăри суйлавçăсем суйлав участкисене пухăнма пуçларĕç. Кино-театрта вырнаçакан 1-мĕш суйлав участкине чи малтан комбинатри рабочи М. М. Камагин хăйĕн арăмĕпе Улђйанапа пĕрле пырса çитрĕ. Вĕсем суйлав бӳллетенĕсене чи малтан алла илнипе савăнчĕç. Камагин хыççăн суйлав комиççи сĕтелĕ умне суйлавçăсем пĕрин хыççăн тепри вĕçĕ-хĕррисĕр йышлăн пыраççĕ. Суйлавçăсем хăйсем спискăсенчи номĕрĕсене лайăх пĕлсе тăни суйлавсене хăвăрт туса пыма май параť. Кăнтăрла 12 сехет тĕлне ку участкăри суйлавçăсенчен 85 процент хăйсен бӳллетенĕсене урнă ăшне йама ĕлкĕрнĕ.

Вăтам шкулта вырнаçакан суйлав участкине ир-ирех „Путь" колхоз членĕсем массăлăн лашасемпе пырса çитрĕç. Вĕсем пурте савăнăçпа тулнă. Суйлав комиççи председателĕ Фирсов йулташ патне вăтам пӳлĕ çын пырса тăчĕ

— Манăн арăм чирлĕ, ака тухтăртан илнĕ хут, вăл сасăлама килеймест.

Суйлав комиççи ку ыйтăва çийĕнчех татса пачĕ, кăнтăрла 12 сехет тĕлне ку участкăра суйлавçăсен 75 проценчĕ сасăлама ĕлкĕрнĕ.

Комбинат клубĕнче 3 мĕш участкă вырнаçнă. Ирхине 6 сехет çитсенех суйлав кабинине грузчикрен мастăра ӳссе çитĕнне Патайев йулташ тата унăн арăмĕ кĕрсе кайрĕç. Патайев йулташ хыççăнах П. Мошков хăйĕн çемйинчи 5 суйлавçăпа пĕрле пырса тăчĕ. Мошков пайан тулли пурнăçпа пурăннăшăн, ывăл-хĕрсем умĕнче телейлĕх çулĕ уçă пулнăшăн савăнаť. Унăн ывăл-хĕрĕсем пурте паллă çынсем—пĕри стахановец, тепри учител, виççĕмĕш райлитуполномоченнайĕ, хăй охраник, арăмĕ килте.

Суйлава ваттисем те çамрăккисемпе пĕр танăх хаваслансa пыраççĕ. Слободкă йалĕнчи 70 çулхи карчăк Анна Гоношилова ирхине 6 сехетре колхозри лашасене кӳлессине кĕтмесĕр хăй çуран суйлав участкине пынă.

Комбинат клубĕнче суйлав пысăк савăнăçпа иртет. Суйлавçăсем пынă вăхăтрах рабочисем урăх пулĕмсенче хăйсен кулђтурлă вăййисене кăтартаççĕ. Пӳр участкăсенче те буфетсем, ача йаслисем, хĕрлĕ кĕтессем ĕçлеççĕ.

М. Титов

Куславкка.

—★○○○★—

Двигателпе ĕçлекен арман

СĔНТĔРВĂРРИ. Шуршăлти Блюхер йачĕпе тăракан колхоз двигатĕл вăйĕпе ĕçлекен арман туса пĕтерет. Çĕнĕ арман çак кунсенчех ĕçе кĕмелле. Двигатĕл 18 лаша вăйлĕ. Армана вăй парса тănисĕр пуçне, двигатĕл 170 лампăчкă çутатма пултараť. Çапла вара колхозниксем те Илйич çутине усă курма пуçлаççĕ.

Г. Иванов.

Николай Иванович Йежов йулташ сăмахĕ

(ЙУЛАШКИ)

Есĕр куратăр ĕнтĕ, йулташсем, çав çухатусем ахаль пĕтмерĕç, çĕр хутăн таврăнса килчĕç. Анчах çав çухатусем çинчен епĕр нихçан та манмастпăр, епĕр вĕсем çинчен йăланах асра тытăпăр. (Алă çупаççĕ).

Çухатусемсĕр иртме пултарнă-и епĕр? Çук, йулташсем. Социалисăм пĕлĕт çинчен таталса анмасть, ăна кĕрешÿре çапăçса илес пулать. Капиталиссем, помещиксем, кулаксемпе торговецсем урса кайса хирĕç тăнине çĕнтерсессĕр рабочисемпе хресченсен государстви çирĕплетме май килмест, унсăрăн социализма кĕрешсе илеймĕн.

Халĕ те-ха, йулташсем, кĕрешÿ пĕтмен. Пирĕн çул çинче сахал мар йăвăрлăхсем тĕл пулĕç. Пирĕн çĕршыва йĕри-тавра тăшманла капиталисăм хупăрласа тăнине манмала мар. Капиталиссем пире, йулташсем, пирĕн çĕнтерÿсене нихçан та каçармаççĕ. Унтан та ытларах, епĕр мĕн чухлĕ вăйлăрах, мĕн чухлĕ пуйанрах пулса пыратпăр, урса кайнă фашисла буржуази пирĕн çине çавăн чухлĕ ытларах тăрăхать. Вăл, фашисла буржуази, пире хирĕç вăрçă хатĕрлет, хаь пирĕн патра шпионсене, диверсантсене тата сăтăрçăсене пачки-пачкипе йарать. Вăл, хăйĕн фашисла йăлавĕ айĕнче кулак йулашкийĕсене, уголовниксене, троцкисла-бухаринла сăтăрçăсене пĕрлештерсе, капиталисла классен кăкласа пĕтермен йулашкийĕсене совет çĕршывĕнчи ĕçхалăхне хирĕç кĕрешме хавхалантарать. Пирĕн халăх коммунисăм патне малала çĕнтерÿлĕн кайса пынине мĕнле те пулин чарас тесе, çав троцкисла-бухаринла кайашсен йытушкăнĕ пире хирĕç чи вараланчăк, чи тĕттĕм, чи тискер майсемпе кĕрешет.

Клас тăшманĕн пире хирĕçле çав чейе-ирсĕр кĕрешÿ майĕсене чухласа илме пĕлниччен, епĕр хамăр совет çĕршывне çав йĕрĕнчĕксенчен пĕтĕмпех тасатма хăватлă пулниччен пирĕн малашнехи çитĕнÿсем сахал мар килеççĕ. Вăл та анчах мар-ха, йулташсем, вара çухатусем те сахалрах пулĕç. Епĕр хамăрăн большевикла революцилĕ сыхăлăха хăпартса пыниччен пирĕн малашнехи çитĕнÿсем сахал мар килеççĕ. Çавна валли пирĕн уроксем çителекиччен те ытларах. Паллах, йулташсем, епĕр хамăрăн аслă стройкă ĕçĕсене туса пынă. Епĕр хашпĕр чухне хамăрăн çитĕнÿсемпе ытла пит касăх кайнă, хамăрăн строительствин тĕксĕм йенĕсене тата, пуринчен питрех, клас тăшманне курман,—клас тăшманĕ, епĕр çитĕнÿсемпе касăх кайнине усă курса, пире аçта май килнĕ çĕрте тата мĕнле май килнĕ çавăнпа вăрттăн çиленнĕ.

Сире епĕ, йулташсем, пĕр калама çук йăвăр урок çинчен астутарасшăн. Виçĕ çул кайала епĕр пирĕн партин чи лайăх ывăлĕн пуçне, чи лайăх сталинеца, чи таса чĕреллĕ çынна, большевик-революционера, пирĕн партин руководителĕсенчен пĕрине—Сергей Мироновича Кирова çухатрăмăр.

Çав урока епĕр нихçан та манас çук.

Çав çухатушăн епĕр нихçан та каçарас çук. Троцкисла-бухаринла шпионсен йытушкăнĕ Киров йулташ пуçĕшĕн пире хаклă тÿлĕ. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Малала Йежов йулташ парти троцкисла-зиновйевла-бухаринла бандăпа кĕрешнин историйĕ çинчен чарăнса тăрса, буржуази службинче тăракан троцкисла-бухаринла йытушкăнĕ çинчен тĕплĕн калаçа парать. Вăл, совет халăхĕ—йут çĕршыв разведкисен ирсĕр фашисла-бухаринла агенчĕсене курайманни çинчен калать. Троцкисла-зиновйевла-, бухаринла-фашисла бандăпа кĕрешÿ çинчен калаçа кăтартнă хыççăн, Йежов йулташ çапла калат:—Пирĕн совет халăхĕ çав капиталис господасен ыхланла прикавчиксене, рабочи класа пĕтĕм ĕçхалăхне хайар тăшманĕсене пĕрне те хăвармиччен пĕтерсе хурĕ!

Малала Йежов йулташ çапла калат:

— Йулташсем, Аслă Совета манăн кандидатурăна Горький облаçĕнчи чи шултра заводсенчен тăратнишĕн епĕ савăнатăп. Епĕ ăнланатăп,—есĕр манăн кандидатурăна манăн хамăн пахалăхсене курса кăна мар тăратнă. Епĕ, хамăр партин ывăлĕ, Ленин—Сталин партийĕ вĕрентсе ÿстернĕ çын, сирĕн шанчака, халăх шанчăкне тивĕçле пултăм курăнать. Ку вăл, ĕçхалăх шанчăкĕ—большевикшăн пурте пулса тăрать. Халăх шанчăкĕсĕр ирĕншĕн пурнăç та çук. (Алă çупаççĕ).

Йулташсем, епĕ, есĕр хуна çав шанчака тĕрĕсе кăларма тăрăшăп. (Алă çупаççĕ). Хамăн вăй çитнĕ чух, хамăн сывлăх çитнĕ чух, епĕ сирĕнпе пĕрле хамăрăн Ленин—Сталин партин аслă йалавне ÿкермĕп. (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ).

Совет халăхĕн интересĕсем—манăн тач тăван интерессем. Халăхăн интересĕсене епĕ хам йунпа сыхлама хатĕр. (Алă çупаççĕ). Манăн, йулташсем, парти çавăн пек вĕрентсе ÿстернĕ, епĕ çавăн пек шухăшлатăп, куллен-кун çавăн пек вĕрентсе пырат пире Сталин йулташ. (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ).

Сывă пултăр пирĕн хăватлă совет çĕршывĕ! Вăл, тăшмансем хăрушăшăн, ĕçхалăхне савăнăçшăн чечекленсе, çирĕпленсе пытăр! (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ).

Сывă пултăр пирĕн аслă, никам çĕнтерейми Ленин—Сталин партийĕ! (Алă çупаççĕ).

Сывă пултăр пирĕншĕн пуриншĕн те уйрăмах хаклă пулса тăракан çын, пирĕн партин руководителĕ, пирĕн халăхăн руководителĕ Сталин йулташ!

(Хытă алă çупаççĕ: залри пĕтĕм халăх ура çине тăрать, кăшкăраççĕ: „Сталин йулташа урра!" Оркестр „Интернационал" выльать).

Пĕтĕм халăх уйавĕ

Хĕрлĕ столицăра

Хĕрлĕ столица декабĕрĕн 12-мĕшĕнчи историлĕ куна нихçанхи пек те мар ир пуçланă. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун пĕтĕм халăхăн аслă уйавĕ пулса тăнă.

Ирхине 6 сехетре суйлав участкисен алăкĕсем ханасене кĕтсе уçălнă. Праçникри пек тумланнă телейлĕ суйлавçăсем ушкăн ушкăнпе, çемйи çемйипе тата пĕчченшерĕн хăйсен гражданла чыслă тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртме татти-çыпписĕр малала шунă. Пурин кăмăлĕ те çекленнĕ, пурте хавасланнă.

Сталински суйлав округĕнче—питĕ пысăк çĕклевÿ.

81-мĕш суйлав участки хăйĕн суйлавçисене кăтартулă кĕтсе илнĕ.

Участкăна 9 сехет тĕлне Сталин йулташ Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсен пухувĕнче калаçнă сăмаха пичетленĕ „Правда" хаçата нумай илсе пынă. Çулпуç сăмахĕ суйлавçăсене çĕнĕрен çĕклентернĕ.

Суйлав пуçлансан виçĕ сехет хушшинчех 700 ытла суйлавçă сасăланă.

Октаберски районри 32-мĕш суйлав участки çурчĕ—Тимирйазев йачĕпе тăракан йалхуçалăх академин клубĕ алăкĕсем умĕнче сасăлама тытăниччен нумай вăхăт малтан 500 йахăн çын пухăнса тăнă. Совет çĕршывĕн хаваслă йуррисем йанраса кайаççĕ. Çамрăксем йурлаççĕ, ваттисем те йурлаççĕ.

Шап ултă сехет. Сасăлу пуçланнă. Чи малтан хаваслă çамрăк каччăсемпе хĕрсен ушкăнĕ пырать. Вĕсен кăкрисем Совет Сойузĕн орденĕсемпе илемленнĕ. Вĕсем колхозниксемпе колхозницăсем, колхоз уйхирĕсен маçтăрĕсем. Вĕсене çĕршыв Академине вĕренме йанă.

Çирĕппĕн утать çĕршывăн йатлă тракториски, Кубаньри казак хĕрĕ Прасковйа Ивановна Ковардак. Краснодар крайĕнчи, Йейск округĕнчи ĕççыннисем ăна пĕр сасăпах Аслă Совета депутата суйлама кандидата палăртнă.

„Епĕ ку куна нихçан та манмастăп,—тет Пашă Ковардак.—Вăл чи телейлĕ, чи савăнăçлă кунсенчен пĕри пулса ĕмĕрлĕхех ман асăмра йулать. Суйлава епĕ, ĕнер Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсем умĕнче хамăрăн йуратнă çулпуç тата учителĕ, тăван атте Сталин йулташ калаçнă сăмахсемпе хавхаланса килтĕм. Хамăн бÿллетене урнана йарса, епĕ Ленинăн—Сталинăн аслă партишĕн, вĕсне çитиччĕнех халăха паранна, коммунисăм ĕçне паранна çынсемшĕн сасăларăм".

Ковардак хыççăн урнă патне социалисăмла ĕçен Геройĕсем орденоносецсем—трактор бригадин бригадирĕ Трофим Костенко, комбайнер Полагутин, звеновод Анна Пронкина, комбайнер Соловйов т. ыт. те пыраççĕ.

Пролетарски суйлав округĕ. 91-мĕш участкă. Кунта Мускаври гигантсен—Сталин йачĕпе тăракан автозавод тата Киров йачĕпе тăракан „Динамо" завод рабочисемпе служăщицсем пурăнаççĕ.

Суйлавçăсем сасăлама тытăниччен чылай вăхăт малтан нумайăн пухăннă. Çамрăксемпе пĕрле ватăрах рабочисем, работницăсем, килхуçи хĕрарăмсем купăспа частушкăсем йурлаççĕ, ташлаççĕ. Хăйсен ачисене вĕсем йатарласа хатĕрленĕ ача пÿлĕмĕсене йанă. Вĕсене унта врачсемпе сестрасем пăхаççĕ.

Чи малтан Сталин йачĕпе тăракан автозаводри стахановецсен виçĕ тăвансен бригадин бригадирĕ—Владимир Федорович Скрйабин сасăлать.

... Çапла пуçланчĕ 1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕшĕнчи чаплă кун. Хĕрлĕ столицăн телейлĕ суйлавçисем, хăйсен пысăк прависене туйнипе тулли кăмăллăскерсем, ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавне картухса, çĕршывăн чи лайăх çынсемшĕн, коммуниссен тата партире тăманнисен никам çĕмĕрейми блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăларĕç.

(ТАСС)

Национальнăçсен туслăхĕ

ЛЕНИНГРАД. Епĕр, çар шкулĕнче вĕренекен чăваш ачисем, хамăр республикăри ĕççыннисем патне красноармейецла хĕрÿлĕ салам йаратпăр.

Пирĕн алла хĕçпăшал тыттарса Совет Сойузне тăшмансем тапăнасран сыхлама хушнипе тăван çĕршыв пире пысăк чыс турĕ. Епĕр лайăх ăнланатпăр—„Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнчи çар служби—ССР Сойузĕн гражданĕсен хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрать" (ССРС Конституцин 132-ш статйинчен). Хĕрлĕ Çара килни уйăх та çитмерĕ, епĕр ĕнтĕ хĕрлĕ казармăри пурнăçа хăнăхрăмăр, Хĕрлĕ Çар пурнăçĕпе паллашрăмăр.

Патша вăхăтĕнчи салтаксен пурнăçне курман епĕр, анчах кĕнекесем тăрăх, хамăр пиччесем, аттесем, мучисем каласа кăтартнă тăрăх вĕсем йепле йытă пек асаплanса, мăшкăл тÿссе пурăннине аван пĕлетпĕр. Хĕрлĕ Çар пирĕншĕн пуриншĕн те чăн-чăн шкул пулса тăрать. Епĕр кунта темиçе национальнăç ывăлĕсем пурте пĕр семйери пек туслашса пурăнатпăр. Пĕр наци йенчен теприне мăшкăл сăмах каласа кÿрентересси çук. Чăваш-и есĕ, вырăс и, туркмен йе карел—пурте пĕртан правалă. Акă декабĕрĕн 5-мĕшĕнче, Советсен Пĕтĕм Сойузри Чрезвычайлă VIII-ш Сйесĕ ССР Сойузĕн Конституцине çирĕплетни çулталăк тултарнă кун, Сталинла Конституци кунне уйавласа иртертĕмĕр. Епĕр, красноармейецсем, аслă Совет Сойузĕнчи мĕн пур ĕççыннисем пекех, Сталинла Конституци паракан ĕçлев, канăç, вĕренÿ, суйлав прависемпе туллин усă куратпăр. Сталинла тапхăрта пурăнма тата ĕçлеме телейлĕ те савăнăçлă! Конституци уйавĕнче епĕр хамăр умра тăракан обйазаннăçсене чыслăн та тÿррĕн пурнăçа кĕртме пулса тупа турăмăр.

Пирĕн канăçлă вăхăт савăнăçлăн иртет. Декабĕрĕн 5 мĕшĕнче чăваш ачисем пĕтĕм курсантсем умĕнче хăйсен пултарулăхне кăтартса панчĕç. Сăвăсем, частушкăсем каларĕç, ташларĕç, чăваш хорĕ йурăсем йурларĕ.

Вĕренÿре чи малта пулма, шкултан „отлично" паллăсемпе вĕренсе тухса чи лайăх командирсем пулма тăрăшатпăр.

К. Афанасйев.

Вырăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри тăшмансем совет сучĕ умĕнче

Халăх тăшманĕсене тивĕçлĕ наказани пачĕç*)

1937 çулхи нойаберĕн 29-мĕшпе декабĕрĕн 10-мĕш хушшинче Чăваш АССР Аслă Сучĕн Специальнăй Коллегийĕ, Шупашкар хулинче, судăн уçă ларувĕнче вырăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре контрреволюцилĕ сăтарлă ĕç туса пурăннă тăшмансен ĕçне пăхса тухрĕ. Суд составĕ—суд председателĕ Семенов йулташ, членĕсем Алмазов тата Савушкина йулташсем, çекретарĕ Андрейев йулташ, судра государствă йенчен айăплакапа защитниксем пулчĕç.

Суд çакăн пек **приговор** йышăнчĕ:

1. Матвей Филиппович **Спиридоновпа** Александр Тимофейевич **Михопаркина** Уголовлă Кодексăн 57—7 мĕшпе 58—11-мĕш статйисем тăрăх—чи пысăк уголовлă наказани парса персе вĕлермеле.

2. Александр Петрович **Шулова** Уголовлă Кодексăн 57—7-мĕшпе 58—11-мĕш статйисем тăрăх тата 1937 çулхи октаберĕн 2-мĕшĕнче тухнă саккунпа усă курса 25 çул срукláха ирĕксĕр хăвармала.

3. Дмитрий Трофимович **Павлова** Уголовлă Кодексăн 57—7-мĕшпе 58—11-мĕш статйисем тăрăх тата 1937 çулхи октаберĕн 2-мĕшĕнче тухнă саккунпа усă курса 15 çул срукláха ирĕксĕр хăвармала.

4. Константин Иванович **Орлова** Уголовлă Кодексăн 58—7-мĕшпе 58—11-мĕш статйисем тăрăх тата 1937 çулхи октаберĕн 2-мĕшĕнче тухнă саккунпа усă курса 12 çул срукláха ирĕксĕр хăвармала.

5. Михаил Иванович **Семйагина** Уголовлă Кодексăн 58—10-мĕш статйин 1-мĕш пайĕ тăрăх 7 çуллăха ирĕксĕр хăвармала тата Уголовлă Кодексăн 58—7-мĕшпе 58—11-мĕш статйисем тăрăх 10 çул срукláха ирĕксĕр хăвармала, пĕрле 10 çул срукláха ирĕксĕр хăвармала.

6. Тимофей Сергейевич **Сурикова** Уголовлă Кодексăн 58—7-мĕш статйин 1-мĕш пайĕ тăрăх 5 çуллăха ирĕксĕр хăвармала тата 58—7-мĕшпе 58-11-мĕш статйисем тăрăх 7 çул срукláха ирĕксĕр хăвармала, вăл тунă преступленишĕн пĕрле 7 çул срукláха ирĕксĕр хăвармала.

7. Василий Иванович **Зайкова** Уголовлă Кодексăн 58—7-мĕшпе 58—11-мĕш статйисем тăрăх 5 çул срукláха ирĕксĕр хăвармала.

Суд, наказани тÿссе ирттернĕ хыççăн, Орловпа Семйагина 5 çул срукláха, Суриковпа Зайкова—кашнине 3 çул срукláха суйлав прависемсĕр хăварма йышăнчĕ. Судпа айăпланнисен хăйсен пурлăхĕсене пуринне те суд государствă дохочĕ валли конфискацилеме йышăнчĕ.

Приговор татăклă.

*) „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн декабĕрĕн 2, 3, 4, 7, 8, 9, 10 тата 11-мĕшĕсенче тухнă номĕрсене пăхăр.

Театр çурчĕ таса пулмала

Чăвашсен государствă академилĕ театрĕ 1918 çултанпа пĕр çуртра ĕçлет. Халăх тăшманĕ Максимов-Кошкинский директор пулса ĕçленĕ вăхăтра театра йухăнтарса çеç пурăннă. Акă теслĕх, театрти декораци материалĕсене пуçтарса хума ку таранччен йатарласа тунă склад çук. Пĕр-пĕр постановкă хыççăн декорацисене урамах кăларса пăрахаççĕ. Кунта вара йурпа-çăмăрпа ишĕлсе выртнă хыççăн, вăл декораци тепĕр постановкă валли пачах йурăхсăра тухать.

Чаршав хыçĕнче, сценă çинче те нимĕн тăрлавĕ те çук. Краскă шăрши кĕрет, тусан, çÿп-çап тулса ларнă. Театр çурчĕ таса, культуралă пулмала.

Н. Митрофанов.

Ĕçрен пăрăннă

Обком пленумĕ пулнăранпа нумай вăхăт иртрĕ пулин те Канаш районĕнчи Кивĕ-Шелттем йалсоветĕ финанс ĕçне кирлĕ пек выранă лартман. Йалсовет членĕсене пленум решенийĕсем çинчен ăнлантарса паман, йалсовет çумĕнчи финанс секцине нимле чĕрĕ пулăшу та памасть. Çавна пула йалсоветра укçатенкĕ пухас ĕç калама çук йапăх пырать. „Хĕрлĕ Çăлтăр" колхозăн 4020 тенкĕ, „Акатуй" колхозăн 315 тенкĕлĕх зайом укçине памала, вĕсем ку тарана çитсе те пĕр пус та тÿлемен. Пĕр Кивĕ-Шелттемри Сталин йулташ йачĕпе тăракан колхоз çех 1470 тенкĕрен 314 тенкĕ тÿлесе плана 21 процент тултарнă.

Самообложени укçине йалсоветĕн 4410 тенкĕ пуçтармала пулнă пулсан, 829 тенкĕ çеç пуçтарнă. Йалхуçалăх налогĕпе страховкă укçине пухас ĕçрен йалсовет йăлтах уйрăлса кайнă. Йалсовет членĕсем пленумсене çÿремеççĕ. Пленумĕ те икĕ уйăхра аран пулса пырать. Секци руководителĕсенчен отчот итлемеççĕ.

Ив. Радиков.

Улталакан приказчик

ЙЕТĔРНЕ. Балдай йалповĕнчи Мирон Владимиров приказчик лавкана таса тытмасть. Урайĕсем пылчăклă. Сутмали таварсем çине тусан пуснă. Çавăн пекех вăл хăйне те таса тытмасть. Краçын тыткаланă хыççăн аллине çумасăрах çимели йапаласем илсе виççе парать.

М. Владимиров çынсене улталани те пулать. Таварсене кайарах туртарса парать. Вĕсен хакне кăтарса çырса çакман.

М. Шуçăм.

ХРОНИКĂ

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ С. В. Кафтанов йулташа ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи аслă шкул ĕçĕсен Пĕтĕм Сойузри Комитечĕн председателĕ тунă.

(ТАСС).

Кантон коммунĕ пулни 10 çул тултарчĕ

10 çул кайарах, 1927 çулти декабĕрĕн 12-мĕшĕнче Кăнтăр Китайри пысăк хулара—Кантонра хĕçпăшаллă рабочисемпе хресченсем тата салтаксем империалиссемпе Китай милитарисĕсен тискер влаçне ишсе антарнă. Çак паттăр восстанире Кантонри рабочисем питĕ вăйлăн, питĕ хăватлăн çапăçнă.

Кантонри восстанийе Китайри коммуниссен партийĕ йертсе пынă. Вăл массăсен вăйлă кĕрешĕвĕн малти еретĕнче пырса паттăрлăх кăтартнă. Китайри коммуниссен парти лайăх ывăлĕсен йачĕсем—Су Чжао—Чжен (рабочи—морйак, коммунă правителствин председателĕ), Чжан Те—лай (Су Чжао—Чжен пыриччен коммунă правителствин председателĕ пулнăскер, çар тата тинĕс ĕçĕсен комиссарĕ), Пын бай (Китайри хресченсен çулпуçĕ), Йун Дай—ин (Китай çамрăкĕсен руководителĕ) йулташсем халăх ĕçĕшĕн, коммунă ĕçĕшĕн паттăрăн кĕрешни пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен ăстăнне ĕмĕр манми кĕрсе йулать.

Кантон коммунĕ нумай пурнайман. Вăл виçĕ куна йахăн çеç пурăннă. Анчах та çак кĕске срук хушшинчех вăл революцилĕ кĕрешÿн паттăрлăхне пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса панă. Кантонри совет империалисла государствăсем Китайа çаратмала тунă договорсене пăрахăçа кăларнă, 8 сехетлĕ ĕçкунĕ тăвасси çинчен, ĕçукçине ÿстересси çинчен, улпутсен çĕрĕсене туртса илсе ĕçхресченĕсене тÿлевсĕр парасси, шултăра буржуазипе улпутсен çурчĕсене туртса илсе вĕсене ĕççыннисене парасси çинчен, ĕççĕр тăрса йулнă рабочисене государствă йенчен пулăшу парасси çинчен декретсем кăларнă. Кантонри совет хăй ĕçе тытăнсанах политикă ĕçĕшĕн тĕрмене хупнă виçĕ пин çынна тĕрмерен кăларнă. Хĕрлĕ Çар тата контрреволюципе кĕрешме Чрезвычайлă комиссси организациленĕ.

Совет Сойузĕнчи ĕççыннисемпе пĕтĕм тĕнчери пролетариата чĕнсе каланинче Кантонри совет, Кантон пролетариачĕ хăй пĕтĕм тĕнчери пролетариатпа пĕр шухăшлă пулни çинчен, социалисăм ĕçĕшĕн кĕрешме хатĕр тăни çинчен пĕлтернĕ.

Кантон коммунне реакцилĕ вăй çĕнтернĕ. Китай халăхĕн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсене 4 пин çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Урса кайнă реакционерсем нимĕн хĕçпăшалсăр хĕрарăмсемпе ачасене пулеметсенчен персе вĕлернĕ. Революционерсене темиçе пин çынна тĕрмене хупнă, вĕсене асаплантарнă, вĕсенчен мăшкăланă. Реакци вĕçи-хĕррисĕр алхаса кайнă, вĕсем нимĕн айăпсăр совет консульсвинче ĕçлекен 5 çынна вĕлернĕ. Йутçĕршыв тата Китай контрреволюцийĕ Кантонри киревсĕр ĕçсемпе Париж коммунĕн палачĕсенчен те иртсе кайнă.

Восстанине йертсе пыракансен йăнăшсем пулнă пулсан та, Кантон коммунĕ çурма колонилĕ çĕршывра коммуниссен парти йертсе пынипе пролетариатпа хресченсен демократилĕ диктатурине тума май пуррине кăтартса панă.

МОПР Ĕçтăвкомĕн пленумĕ йышăннă решени тăрăх, декабĕрĕн 12-мĕшне—Кантонри паттăр восстани кунне, Париж коммунĕ кунĕ пекех МОПР кунĕ туса уйавламала тунă.

Çак кун Совет Сойузĕнчи ĕççынни массисемпе пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем хăйсем Китай халăхĕн паттăр кĕрешĕвĕпе пĕр шухăшлă пулнине, хăйсем Китай халăхĕ йенче тăнине кăтартса параççĕ. Кантон коммунĕ пулни 10 ç. тултарнă кун социалисăм çĕршывĕнчи ĕççыннисем, пĕтĕм тĕнчери малта пыракан ĕççыннисен, пур çĕршывсенчи МОПР членĕсен Китай халăхне тăванлă пулăшу памала. Йапони захватчикĕсене хирĕç алла хĕçпăшал тыттăйĕн тăван çĕршывне паттăрăн сыхлакан Китай халăхне пулăшмала.

Йапони империалисăмĕ 450 миллионлă Китай халăхне пĕтерсе хурасшăн. Йапони империалисăмĕ 6 çул хушши ĕнтĕ Китай çĕршывне хăйĕн колонийĕ туса хурасшăн çапăçать. Вăл Манжурине тата Жехе провинцине туртса илчĕ. Ун хыççăн Китайăн Çурçĕрти провинцисене туртса илме тытăнчĕ. Йапони имериалисăмĕ тытса илнĕ облаçсенче Китайăн чукунçулĕсене, банкисене, заводсемпе фабриксене, Китай çĕрĕсене хăйсен аллине туртса илеççĕ. Китай ĕçхресченĕсене хăйсен çĕрĕсенчен Йапони интервенчĕсем хăваласа кăларса йараççĕ. Китай хĕрарăмĕсенчен мăшкăлаççĕ, вĕсене пусмăрлаççĕ. Йапони пусмăрне пăхăнман кашни çынна вĕлереççĕ, тĕрмене хупаççĕ. Темиçе миллион Китай çыннисене выçлăх патне илсе пынă.

1937 çулти ийуль уйăхĕнчен пуçласа Йапони Китай халăхне хирĕç пысăк вăрçă пуçласа йачĕ. Йапони Китай çĕршывне çур миллион ытла çынтан тăракан çар йанă. Китай тинĕсĕнче Йапонин çар карапĕсем тăраççĕ. Йапонин авиацийĕ Китайăн 62 хули çине бомбăсем пăрахса çĕмĕреççĕ. Вĕсем заводсемпе фабриксене, институтсене çĕмĕрсе пĕтереççĕ. Йапони авиацийĕ Китайăн мирлĕ пурнакан халăхне хĕрарăмсемпе ачасене вĕлерсе пĕтерет.

Нумай миллионлă аслă Китай халăхĕ пысăк хăрушлăх умĕнче тăрать. Çак хăрушлăх вăхăтĕнче Китайăн патриочĕсем çирĕппĕн пĕрлешсе тăма пуçларĕç. Йапони агреççине хирĕç хайаррăн кĕрешме Китай халăхĕн пĕртен-пĕр çирĕп фронтне тăваççĕ. Çак халăх фрончĕ Йапони империалисăмне хирĕç кĕрешес ĕçре паллă выранта тăрать.

Китайри коммуниссен партийĕ—Китай халăхĕн çулпуçĕ. Вăл Кантонри восстани вăхăтĕнче рабочисемпе ĕççыннисене йертсе пынă, империалиссемпе Китай милитарисĕсене хирĕç паттăрăн кĕрешнĕ. Коммунă пĕтнĕ хыççăн та коммунисен партийĕ советсен йалавне Китайăн чылай пысăк территорийĕнче çÿле çĕкленĕ, вăл çапăçура кĕрешсе пиçнĕ, дисциплиналă Хĕрлĕ Çар турĕ. Çак Хĕрлĕ Çар Цзйанçи провинцинчен Сычуан провинцине унтан Шенси провинцине çитиччен тĕлĕнмеле поход турĕ. Халĕ Йапони империалисăмне хирĕç кĕрешес ĕçре Китайăн 8-мĕш çарĕ—(Хĕрлĕ Çар пулнăскер) çĕнтерÿ хыççăн çĕнтерÿ тăвать. Вăл Китай халăхĕ Йапони имериалисăмне татăклă отпор пама пултарнине пĕтĕм тĕнчене кăтартать.

Хăйĕн халăхне ирĕке кăларасшăн Китайăн лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсем нумай нуша курнă, нумай йăвăрлăх тÿснĕ. Анчах вĕсем йухтарнă йун усăсăр пулман Халĕ пĕтĕм Китай халăхĕ пĕрлĕхлĕ, вăл Йапони империалисĕсене Китай çĕршывĕнчен хăваласа кăларма хатĕр тăрать.

Йапони Китай çĕршывне туртса илме тытăннă малтанхи кунсенчех Китай коммуниссен партийĕ халăхăн нацилĕ пĕрлĕх фронтне тăвассишĕн çине тăрса кĕрешнĕ. Çак кĕрешÿ ăнăçулă пулчĕ. Китай çарĕпĕ халăхĕ Йапони захватчикĕсене хирĕç халĕ хайаррăн тăни компартин халăхăн пĕрлĕх фронтне тăвассишĕн кĕрешнин результачĕ. Китайри хальхи вăхăтри лару-тăру Китай большевикĕсен политики тĕрĕссине çирĕплетет. Халĕ Китайăн совет районĕсене Китай республикин уйрăм районĕсем тунă, вĕсем пĕтĕм Китайри режима демократизацилес ĕçре питĕ пысăк выранта тăраççĕ. Нацилĕ-революцилĕ çар тăвас ĕçе пуçăннă, çак çара ĕлĕк Хĕрлĕ Çар пулнă (халĕ Китайăн 8-мĕш Çарĕ) кĕрет. Çак Çарăн командирне Нанкин правителстви Чжу Де йулташа лартнă, унăн помошникĕ Пен Де-хуай. Китай большевикĕсен çулпуçĕ Мао Цзе-дун йулташа Китайăн нацилĕ оборони совечĕн членне суйласа лартнă, Хĕрлĕ Çарăн руководителĕсенчен пĕрне Чжоу Ен-лай йулташ Нанкинри Çар совечĕн членĕ.

Йапони имериалисĕсем Китайра тискер ĕç тунипе пĕтĕм тĕнче тарăхать. Пĕтĕм тĕнчери малта пыракан çынсем хăйсем Китай халăхĕпе пĕр шухăшлă пулнине кăтартаççĕ. Халĕ Америкăра, Йевропăра, Азире Йапони таварĕсене бойкот тăвас йухăм, Китай халăхне пулăшма укçа-тенкĕ, емелсем пухас ĕç сарăлсах пырать. Китай халăхне пулăшма Лигă Наци те укçа панă.

Троцкисла-бухаринла бандитсем—Йапони интервенчĕсен агĕнчĕсем Китайра киревсĕр ĕç, шпионла ĕç, сăтăрлă ĕç тăваççĕ. Вĕсем Китай халăхне хирĕç, Йапони империалисăмĕ майлă. Çак Йапони йыттисем Йапонине хирĕçле тăракан деятелсене вĕлереççĕ, шпионлă тата диверсилĕ ĕçсем тăваççĕ. Китай халăхĕн вăйне хавшатас тĕлĕшпе заговорсем тăваççĕ. Çакнашкал заговора троцкисла-бухаринла бандитсем Гуанси провинцинче тунă.

Китай халăхĕ троцкисла-бухаринла агентсене Китай çĕршывĕнчен шăлса ывăтать. Çак бандитсем хĕçпăшаллă халăхăн баталйонĕсене, хăйĕн халăхĕн, тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен Китай халăхне малала кайма чарма пултараймасть.

Пайан социалисăмла çĕршывра пурăнакан совет халăхĕн Китай халăхне активлăн пулăшмала. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама пурте пĕр çын пек кар тухса, хамăрăн сасăсене большевиксен партийĕшĕн, Аслă Сталин йулташшăн, тăван çĕршывăн тивĕçлĕ ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн парса хамăр паттăр Китай халăхĕпе пĕр шухăшлă пулнине кăтартар.

Пĕр кун хушшинче 2 пин

Укçа-тенкĕ пухас ĕçре Шăмат йалсовечĕ (Йетĕрне р.) районри пĕрремĕш выранта тăрать. Суйлава хатĕрленнĕ май, зайом укçине пĕр кун хушшинче икĕ пин тенкĕ пухнă.

В. Çавас.

Извещение

Чебоксарский Горфинотдел предлагает **всех государственных, торговых, кооперативных, промысловых, коммунальных и прочих предприятий** г. Чебоксар, являющихся плательщиками налога с оборота, налога с нетоварных операций, налога с кино, бюджетных наценок, бюджетных разниц, отчислений от прибылей и подоходного налога **зарегистрироваться на 1938 год в Чебоксарском Горфинотделе до 25 декабря 1937 года.** Формы регистрационных карточек должны получить в Горфо.

За уклонение от налоговой регистрации виновные будут привлечены к ответственности.

ГОРФО.

Ответлă редактăр заместителĕ
И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Чăвашснабсбытăн Транспорт кантурне
вăхăтлăх ĕçлеме 1 бухгалтер
йалан ĕçлеме 1 бухгалтер
КИРЛĔ
Ĕçукçи государствă нормированийĕ тăрăх.
3—1

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмелли хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 952. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чуваш полиграфтреста. Заказ № 2601. Тираж 13790. 58—92 см. 1—3 п. л.